чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

82 /26488/№ Ытлари кун, 2014, çу (май), 6 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

820 млн тенкĕ – Канаша аталантарма

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер ĕç тăвакан влаç, федераци тытăмĕсен вырăнти органĕсен, хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов уй-хирти ĕçсемпе паллаштарнă. Кăçал акакан мĕн пур лаптăк 570 пин гектарпа танлашмалла. Ку пĕлтĕрхинчен 20,7 пин гектар нумайрах – 103,8%. Çу уйăхĕн 5-мĕшĕ тĕлне çурхи тата пăрçа йышши культурăсене 139,7 пин гектар акнă – планланин 67%. Ĕçсем Елчĕк, Патăрьел тата Вăрнар районĕсенче лайăх пыраççĕ.

Михаил Игнатьев мĕн пур майпа туллин усă курса çур акине кĕске вăхăтра вĕçлемеллине палăртнă. «Кам малтан акать – тыр-пул та тухăçлă, çухатусем те пĕчĕкрех, мĕншĕн тесен çав хуçалăхсем вырмана та маларах тухаççĕ. Çакă та пысăк пĕлтерĕшлĕ», – тенĕ вăл.

Канашлăва хутшăннисем Канаш хулине аталантармалли инвестици планне сӳтсе явнă. Республика Пуçлăхĕ аса илтернĕ тăрăх – монохуласене тĕревлемелли программăпа килĕшӳллĕн Чăваш Енĕн икĕ хули – Çĕнĕ Шупашкар тата Улатăр – федераци бюджечĕн укçине илнĕ. Ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче РФ Президенчĕ Владимир Путин монохуласене аталантарас ыйтусемпе канашлу ирттернĕ. Кăçал 280 хуларан 8-шĕ пулăшу илĕ, çав шутра – Канаш. Çак тĕллевпе пăхнă 820 млн тенке кăçалхи çĕртме уйăхĕнче уйăрма пуçласçĕ.

Михаил Васильевич Канашри строительство ĕçĕсене пурнăçлама конкурссем ирттерессине тăсса янăшăн хăш-пĕр министерствăна критикленĕ. Çĕр-шыв ертӳçисен шайĕнче принцип тĕлĕшĕнчен йышăну тунă, çавăнпа та мĕн пур конкурса халех, федераци бюджетĕнчен укçа килессе кĕтмесĕрех, ирттермелле.

Канаш хулине аталантармалли инвестици планне 2020 çулччен пурнăçламалла. Унăн тĕллевĕ – монохулан çирĕп аталанăвне, çĕнелĕвне, унти экономикăна диверсификацилессине тивĕçтересси. Хулан экономика хăвачĕн никĕсĕнче машинастроени комплексĕ – «Промтрактор-Вакун» АХО тата «Канашри автоагрегат завочĕ» АУО. Производствăна анлăлатас тĕллевпе унта индустри паркне хута ямалла, çĕнĕ производствăсем уçас, ĕçлекен предприятисене çĕнетес енĕпе стратеги шайĕнчи инвестици проекчĕсене пурнăçлама тытăннă та ĕнтĕ.

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов Çуркуннепе Ĕç уявĕн мероприятийĕсене мĕнле ирттернипе паллаштарнă, Çĕнтерӳ кунне хатĕрленни çинчен каласа панă. Çу уйăхĕн 1-мĕшне халалланă мероприятисен программипе килĕшӳллĕн республикăри хуласенче, райцентрсенче 200 ытла мероприяти иртнĕ, вĕсене 25 пин çын ытла хутшăннă. Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнчи уяв мероприятийĕсене 50 пине яхăн çын хутшăнмалла.

Михаил Игнатьев çу уйăхĕн 1-мĕшне халалланă мероприятисене йĕркеллĕ ирттерессине тивĕçтернĕ мĕн пур службăпа ведомствăна тав тунă, Çĕнтерӳ кунĕ те çавăн пекех çӳллĕ шайра иртессе шаннине палăртнă.

■ **Ю.ВОЛКОВ**

Раççейре, тĕнчере

2016 çул тĕлне – 19 пин хваттер

Çитес 2 çулта РФ Оборона министерстви 18,5 пин çар çыннин çемйине хваттерпе тивĕçтерĕ. Çакăн çинчен РФ Оборона министерствин Патшалăх саккасçипе капиталлă строительство департаменчĕн директорĕ Роман Филимонов пĕлтернĕ.

Çавăн пекех Оборона министерстви çĕр-шыв регионĕсенче çамрăксене службăна контракт йĕркипе кайма хавхалантарасшăн. Çак тĕллевпе Раççейре офицерсем валли – 125 пин, контракт йĕркипе службăра тăракансем валли 281,4 пин хваттер тума палăртнă.

Рамблер

Ачасем ăнтăлса вĕренесси учитель пултарулăхĕнчен килет

сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Республикăра «Çулталăк вĕрентекенĕ» конкурс йăлана кĕчĕ: 1992 çултанпа иртет вăл. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ парас ĕçре тăрăшакансен хушшинче чи пултаруллине, лайăх-хисенчен лайăххине тупма пулăшакан тупăшăвăн пĕлтерĕшĕ – маттуррисене малашне те çитĕнӳсем патне кармашма хавхалантарни. Çавна кура Чăваш Енре педагогсен конкурсĕсем йышлăланчĕç. «Чи лайăх воспитатель», «Чи лайăх социаллă педагог», «Чи лайăх психолог-педагог», «Чи лайăх класс ертӳçи». Кăçалхи çĕнтерӳçĕсене палăртса чыслама ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче Республикăри ача-пăчапа çамрăксен пултарулăх керменне халăх йышлăн пухăнчĕ. Хăйсен профессийĕнче чи маттуррисене саламлама Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та килсе çитрĕ.

Республика конкурсĕсен малтанхи тапхăрĕсем муниципалитетсенче иртнĕ. Финала тухнисен пултарулăхĕпе тĕплĕнрех паллашма, лауреатсене суйласа илме жюри ятарлă лапамра икĕ кун ĕçленĕ. Хальхинче педагогсен ăсталăхне хакламалли вырăн Вăрнарти 2-мĕш вăтам шкул пулнă: «Çулталăк вĕрентекенĕ – 2013» ята тивĕçнĕ Татьяна Сапожниковăн, математика вĕрентекенĕн, тăван кĕтесĕ.

Уçă уроксем, методика семинарĕсем, класс сехечĕсем, ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсем... – хăйсен ăсталăхне вĕрентекенсем тĕрлĕ мероприятире уçнă. Жюри ушкăнĕнчи Эльвира Баранова, психологи ăслăлăхĕсен докторĕ, икĕ çав куна аса илсе çапла каларĕ: «Эпĕ педагогсен чикĕсĕр чăтăмлăхĕнчен тĕлĕнме халĕ те пăрахаймастăп».

Ăмăртура вара яланах чи вăйли, чи чăтăмли çĕнтерет. Чăн та, Чăваш Ен вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕпе Владимир Ивановпа та килĕшмеллех: «Çак конкурссене 1500 ытла вĕрентекен хутшăнчĕ. Вĕсенчен пĕри те выляса яман – çĕнтернĕ. Хăйсен коллективĕнче-и, районта-и... Чи кирли – тупăшăва хутшăнма хевте çитерни».

Чăваш Ен ертӳçи, чыслава лауреатсен ячĕсене пĕлтернĕ хыççăн килсе çитнĕскер, конкурссен техĕмĕ ыттисенчен уйрăмрах ăстасене тупса палăртнинче пулнине асăннĕ.

– Ăмăртас йăла совет тапхăрĕнче кăна мар, паян та усă кӳрет. Вĕрентекен пултарулăхĕнчен çитĕнекен ăрăвăн ăнăçлăхĕ килет. Аслисен тĕслĕхĕпе ачасем маттур пулма ăнтăлаççĕ. Çапла пĕр çитĕнӳ малашнехисене витĕм кӳрет, – терĕ ăрусен çыхăнăвне палăртса Михаил Васильевич.

Конвертсене уçса çĕнтерӳçĕсен ятне асăнас самант çитрĕ. Залра ларакансем – финала тухнă педагогсен ĕçтешĕсем, вĕренекенĕсем, тус-тăванĕ – хăйсем камшăн «чирленине» кăтартса плакачĕсене çĕклеççĕ. Чи малтан хыттăн алă çупма Улатăрсене шăпа тухрĕ: «Çулталăк социаллă педагогĕ – 2014» ята çак хулари 9-мĕш вăтам шкулта ĕçлекен Наталия Нажалкина тивĕçрĕ.

Педагогсен йышĕнче арçынсем сахалланса юлнишĕн пăшăрханса час-часах калаçатпăр, çыратпăр. Апла пулин те этемлĕхĕн вăйлă çурри хушшинче чăн-чăн ăстасем те пурришĕн хĕпĕртемеллех: психолог-педагогсен ушкăнĕнче чи лайăххи кăçал Республикăри психологипе педагогика реабилитацийĕпе коррекци центрĕн ĕçченĕ Сергей Педюсев пулчĕ.

Кирек мĕнле шкулта та класс ертӳçи пĕлтерĕшлĕ вырăнта: шкул – ача – çемье çыхăнăва йĕркелесе пыраканĕ вăл. «Самый классный классный...» титула Комсомольски районĕнчи Тукай Мишер вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ Гузель Хайртдинова тивĕçрĕ.

Асăннă çĕнтерӳçĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕн Указĕпе çирĕплетнĕ 50 пин тенкĕ преми парса хавхалантарĕç. «Çулталăк воспитателĕ – 2014» номинацин хуçине – Çĕмĕрлери «Родничок» 19-мĕш ача сачĕн воспитательне Татьяна Тетеревовăна – тивĕçекен 100 пин тенкĕ преми те малашнехи çитĕнӳсем патне çул уçма пулăшĕ.

Пултаруллисен ретĕнче чи сумлă ят кирек мĕн тесен те – «Çулталăк вĕрентекенĕ – 2014». Михаил Игнатьев конверта уçса Екатерина Владимирова çĕнтернине пĕлтерсен вĕрентекен тĕлĕннипе çухалса та кайрĕ. Самантранах хăйне алла илчĕ те микрофон умне пырса çапла каларĕ:

– Вĕрентекен – профессии мар, турă пани. Çак конкурса хутшăнни – пурнăçри чи лайăх опыт. Тавах мана пулăшса, хавхалантарса пынă мĕн пур çынна.

Екатерина Михайловна Çĕнĕ Шупашкарти ют чĕлхесене тарăннăн вĕрентекен 5-мĕш шкулта ют чĕлхесемпе пĕлӳ парать. Хăй те çак шкултах вĕреннĕ. Ятарлă программăпа тĕллевлĕн ĕçлекенскер ачасемпе Германи çĕр-шывне те тухса çӳрет. Хăй суйланă çулпа малашне те çирĕппĕн утасса шанать 28-ти çамрăк. Тивĕçнĕ 150 пин тенкĕ премие профессии аталанăвĕнче тĕллевлĕн усă курма тĕв тăвать.

■ **Ирина ПУШКИНА**

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ

Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ çинчен

Чăваш Республикин Конституцийĕн 72-мĕш статйин 6-мĕш пунктне тĕпе хурса **çапла йышăнатăп:**

1. Анатолий Иванович Кузьмина Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрне уйăрса лартас.

2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.

Шупашкар, 2014, ака, 30, 57№.

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

"Ас тăвăм çурти"

Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарта ас тăвăм çуртисене çутаççĕ. Пĕтĕм Раççейри "Ас тăвăм çурти" патриот акцине кирек кам та хутшăнма, çапла майпа Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсен паттăрлăхне хисепленине палăртма пултарать.

Паттăрсене асрах тытнине кăтартас текенсене çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра Шупашкарти "Çĕнтерӳ" асăну комплексĕнчи нихçан сӳнми çулăм патĕнче пуçтарăнма сĕнеççĕ. Акци 20 сехетре пуçланать. Пархатарлă çак мероприятие пурне те хутшăнма чĕнетпĕр. Эсир те ас тăвăм çуртине çутăр!

И.АЙТБЕРОВА.

Тĕнче кубокĕн ялавĕ – Шупашкарта

Китайри Тайцань хулинче хăвăрт утас енĕпе тĕнче кубокĕ вĕçленнĕ. Ăмăрту вăхăтĕнче çăмăл атлетсен Пĕтĕм тĕнчери ассоциацийĕн ялавне 2016 çулхи кубок хуçине – Шупашкара – панă.

Ялава Пĕтĕм тĕнчери ассоциаци вице-президенчĕ Сергей Бубка РФ çăмăл атлетика федерацийĕн ертӳçине Валентин Балахничева тыттарнă. Савăнăçлă церемоние ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников тата Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков хутшăннă.

Аса илтеретпĕр: тĕнче кубокне Шупашкарта ирттерес ыйтăва ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевпа РФ çăмăл атлетика федерацийĕн ертӳçи Валентин Балахничев пуçарнă. 2013 çулта Монакора иртнĕ ларăвĕнче тĕнче кубокне Чăваш Ен тĕп хулинче иккĕмĕш хут йĕркелеме йышăннă.

Кăçалхи ăмăртура çĕр-шывăн пĕрлештернĕ команди 8 медаль çĕнсе илнĕ. Чи сумлă наградăна Мордовире ăсталăха туптакан Михаил Рыжовпа (50 км) Анися Кирдяпкина (20 км) тивĕçнĕ. Тĕнче кубокĕнче Чăваш Ен спортсменĕсем те вăй виçнĕ: Вера Соколова, Марина Пандакова, Петр Трофимов, Денис Сергеев, Клавдия Афанасьева тата Анастасия Чернова. Шел те, пирĕн ентешсем медальсене тивĕçеймен.

А.МИХАЙЛОВ.

Акция хастар хутшăнаççĕ

Çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарта «Георгий хăйăвĕ» Пĕтĕм Раççей акцийĕ старт илет. «Хула хастарĕсем» общество пĕрлĕхĕн волонтерĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене тав сăмахĕ каланине пĕлтерекен хăюсене халăха валеçсе парĕç.

Химиксен хулинче пурăнакансем Георгий хăйăвне çу уйăхĕн 7-8-мĕшĕсенче Çĕнтерӳ тата Собор тӳремĕсенче илме пултарĕç. Ăна алла е сумка çумне, автомобиль антенни çине çыхмалла-çирĕплетмелле. «Георгий хăйăвĕ пĕрлĕх, ырă кăмăллăх палли шутланать. Акцин тĕп тĕллевĕ – çынлăхпа чунлăха аталантарасси, обществăшăн ырă ĕç тăвасси. Ку – пире мирлĕ пурнăç парнеленисене тав тумалли хăйне евĕрлĕ меслет. Яш-кĕрĕмпе хĕрупраç асăннă акцие хастар хутшăнни савăнтарать. Хăйăва валеçекен те, çыхса çӳрекен те çулсерен нумайланса пырать»,– палăртнă Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн специалисчĕ-эксперчĕ Анастасия Муртазина.

А.ГРОМОВА.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

ПĔРИСЕМ ЯТ-СУМЛĂ, ТЕПРИСЕМ...

РФ Спорт министерстви регионсен спортăн тĕп тĕсĕсене çирĕплетнĕ. Ведомство йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Енре аталантараканнисен йышне тепĕр виçĕ ене кĕртнĕ – триатлон, самбо, фристайл. Çапла вара пирĕн республикăра спортăн 12 тĕп тĕсĕ шутланать: велоспорт-маунтинбайк, çăмăл атлетика, спорт кĕрешĕвĕ, спорт гимнастики, ухăран пересси, йывăр атлетика, биатлон, хăлха илтменнисен тата сусăррисен спорчĕ. Çакă ыттисене аталантарманнине пĕлтермест паллах. Тĕслĕхрен, Чăваш Республикинче спортăн 50 федерацине регистрациленĕ, вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Кашни регионăн тĕллевĕ – спортсменсене Олимп вăйăйисене хутшăнма хатĕрлесси. Çӳлерех асăннă спорт тĕсĕсене /самбона шута илмесен/ Олимпиада программине кĕртнĕ.

Шел те, çак йыша чăваш халăхĕн авалах вăй илнĕ тĕсне – кĕрешĕве – кĕртмен. Чăннипе, пирĕн республикăра спортсменсене ăсталăха туптамашкăн уйрăм секцисем те çук. ЧР кĕрешӳ федерацийĕн президенчĕ Виталий Васильев пĕлтернĕ тăрăх – хăйсем çине тăнипе тата ырă çынсем пулăшнипе кăна тĕрлĕ ăмăрту йĕркелеççĕ, ытти региона тухса çӳреççĕ. Кире пуканĕн спорчĕ республикăра çирĕп вăй илнĕ пулин те списока лекмен. Темшĕн йĕлтĕр спорчĕ те «тăрса юлнă», Олимп чемпионĕн Владимир Воронковăн çитĕнĕвĕ çителĕксĕр тенĕ-ши?

Пирĕн республика – çăмăл атлетсен регионĕ. Олимп тӳпине çĕкленнĕ Валентина Егоровăпа Татьяна Архипова марафонçăсене, Елена Николаева, Олимпиада Ивановăпа Владимир Андреев хăвăрт утакансене кам пĕлмест пулĕ. Вĕсен ячĕсем тĕнче ăмăртăвĕн историне ĕмĕрлĕх çырăннă. Маттурсенчен пин-пин чăваш ачи тĕслĕх илет, Олимп çулĕпе утма ĕмĕтленет. Паян çамрăк спортсменсем чупас, хăвăрт утас, йĕтре тĕртес, сăнă ывăтас, çӳллĕшне тата тăршшĕне сикес енĕпе ăсталăха туптаççĕ, вĕсенчен чылайăшĕ тĕрлĕ ăмăртуран наградăпа таврăнать. 2003 тата 2008 çулсенче Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе Европа тата Тĕнче кубокĕсем, кашни çул Раççей кубокĕсемпе чемпионачĕсем иртни те çакнах çирĕплетет. 2016 тата 2018 çулсенче Шупашкар Тĕнче кубокĕсен тĕп хули пулĕ, ун чухне пирĕн республикăна çĕр-шыври чи вăйлă спортсменсем пухăнĕç. Тепĕр çул акă Чăваш Ен çăмăл атлетика енĕпе командăсен Европа чемпионатне йышăнĕ.

Йĕтре тĕртес тата диск ывăтас енĕпе хăй вăхăтĕнче Шупашкар пики Оксана Гаус республика рекордне çĕнетнĕ. Шел те, паянхи кун унăн шайне çитекен тупăнман. Çапах та тренерсем пултаруллă спортсменсене, Чăваш Ен чемпионĕсене Марина Максимовăпа Евгения Смирнова шанаççĕ, вĕсенчен пысăкрах çитĕнӳсем кĕтеççĕ. Çав вăхăтрах эпир çӳллĕшне тата тăршшĕне сикес енĕпе тупăшакан спортсменсене хатĕрлейместпĕр.

Йывăр атлетсен çитĕнĕвĕсем курăмлă. Виктор Андреев, Юрий Мышковец, Ольга Андреева, Вячеслав Ластухин, Александр Мышов, Наталья Хлесткина тĕрлĕ çулта республика чысне Европа, тĕнче, çĕршыв чемпионачĕсенче хӳтĕленĕ. Пулас ăру та вĕсен ят-сумне çĕре ӳкермест. Акă нумаях пулмасть Владикавказра çĕр-шыври çамрăк атлетсен ăмăртăвĕ иртнĕ. Унта пирĕн спортсменсем Ирина Баймулкина, Анатолипе Любовь Иноходовсем, Дмитрий Исаков тĕрлĕ медальпе таврăннă. Малашне те ăнсан вĕсен Олимп вăйăйисене хутшăнма шанăç пур.

Биатлонçăсен те çитĕнӳ сахал мар, çапах çĕр-шыв чемпионатĕнче çĕнтерме хастарлăх çитеймест. Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан Павел Охотниковпа Евгений Петров ытти спортсменпа пĕрле кăçал эстафетăра бронза медаль çĕнсе илнĕшĕн те хавхаланатпăр паллах. Пĕтĕм тĕнче Универсиадинче ылтăн медаль çĕнсе илнĕ Татьяна Семенова çитес Олимпиадăна хутшăнасса шанатпăр. 50 çул каялла биатлон енĕпе республика чемпионĕ ятне пĕрремĕш тивĕçнĕ спортсмен, РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Владимир Григорьев 85 çула çитнĕ пулин те халĕ те çамрăксемпе ĕçлет. Çакнашкал хастар çынсем чăваш биатлонне тата та çӳлерех çĕклессе кĕтетпĕр.

Юлашки çулсенче пирĕн республикăра спортăн хĕллехи тĕсĕ – фристайл – вăй илме тытăнчĕ. Сикмеçаврăнма хăраман çамрăксем «скикросс тата слоуп-стайл» дисциплинăсене уйрăмах кил�кĕштереççĕ, кашни кун ăсталăха туптаса тĕрлĕ ăмăртура палăраççĕ. Çакă кăçал Сочири Олимп вăйăйисене хутшăннă Елена Муратова ячĕпе çыхăннах ахăртнех. Пирĕн спортсменка пьедестал çине хăпараймарĕ пулин те ачасемпе çамрăксене спортпа туслашма хавхалантарчĕ пулĕ. Çак шухăшах Шупашкарти сăрт-ту йĕлтĕрçисен «Вертикаль» центрĕн ертӳçи Валерий Васильев тренер палăртать. Асăннă центртах кăçал фристайл енĕпе республика чемпионачĕ иртнĕ. Хальхи вăхăтра Чăваш Ен спортсменĕсенчен тĕрлĕ турнирта Александр Смирнов, Дмитрий Мулендеев, Максим Яковлев, Никита Васильев, Лана Прусакова палăрнă.

Çĕмĕрле районĕнче çуралса ӳснĕ Валерий Ярды велосипедист XX çуллахи Олимпиадăра /1972/ командăсен тупăшăвĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнса республикăн ят-сумне çӳле çĕклерĕ. Паян вăл хывнă çулпа спортăн тĕнче класлă мастерĕ Ирина Калентьева, Вера Андреева тата ыттисем «çӳреççĕ». Спорт гимнастики те вăй илни савăнтарать. Çак кунсенче 18-ти спорт мастерĕ Полина Федорова Раççей чемпионки пулса тăчĕ. Владислав Поляшов, Евгений Степанов тата пултаруллă ытти гимнаст çултан çул çĕнĕ çитĕнӳ тăваççĕ. Юлашки çулсенче сусăрисемпе хăлха илтменнисен спорчĕ те аталанма тытăнчĕ. 2012 çулта Лондонри Паралимпиадăра Шупашкар пики Елена Иванова тĕрлĕ дистанцире виçĕ медаль çĕнсе илни те çакна çирĕплетет. Пĕлтĕрхи сезон япăх илтекен спортсменсемшĕн ăнăçлă пулчĕ: пирĕн ентешсем Андрей Андреев, Иван Пакин, Анастасия Седова Сурдлимп вăйăйисенчен медальсемпе таврăнчĕç.

Шел те, тӳнтер ен те çук мар. Ухăран пересси спортăн тĕп тĕсĕсен йышĕнче пулин те унăн сумĕ ӳсмест. РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ Ольга Авдеева каланă тăрăх – секцие çӳрекенсен йышĕ çултан çул сахалланать. 40 çул ытла ухăçăсене хатĕрлекенскер ĕçлеме услови çуккине палăртрĕ. Бомбăсенчен хӳтĕленмешкĕн 50 çул каялла хăпартнă сооруженире тренировка ирттереççĕ иккен вĕсем. Унта та пĕрре те юсав ĕçĕсем туман. Тепĕр ыйту – ытти хулана тухса çӳреме майсем çукки. Тен, çавăнпах пулĕ вĕсен йышĕнче Ирина Солдатова тата Юрий Леонтьев пек паллă ухăçăсене курмастпăр.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару

2014 çулăн II çурри валли

«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»

электрон мелпе çырăнса илме пулать.

Çур çуллăх хак:

«Хыпар» – 90 тенкĕ, «Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.

Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 7 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 13, çĕрле 4 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 745 мм, сывлăшри нӳрĕк 42 процент.

Кун тăршшĕ 15 сехет те 44 минут.

Ыран улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çукалать. Çил анăçран çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 8, çĕрле 3 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 754 мм, сывлăшри нӳрĕк 69 процент.

Кун тăршшĕ 15 сехет те 48 минут.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ўкерчёкесем

Çуркуннепе Ĕç уявĕ

Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Çуркуннепе Ĕç уявне халаллăнă мероприятисене хутшăнчĕ.

Чăваш Ен ĕç çыннисен уяв колоннине республика Пуçлăхĕпе пĕрле Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов ертсе пычĕç.

Хулан тĕп урамĕсемпе проспекчĕсем тăрăх ĕç коллективĕсен, вĕренӳ заведенийĕсен, организацисен представителĕсемпе пĕрле ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем, ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертӳçисем, профсоюзсемпе политика партийĕсен представителĕсем утрĕç. Çу уйăхĕн 1-мĕшне халаллăнă мероприятисене пĕтĕмпе 23 пине яхăн çын – Чăваш Ен тĕп хулинче пурăнакансемпе хăнисем – хутшăнчĕç.

Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре митинга хутшăнакансен умĕнче тухса каласнă май Михаил Игнатьев Çуркуннепе Ĕç уявĕ тĕрлĕ тĕне ĕненекен тата политикăна расна хаклакан, тĕрлĕ наци çыннисене пĕр шухăш-ĕмĕтпе – Раççей аталанăвĕпе чечекленĕвĕшĕн – пĕрлештернине палăртрĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ пĕтĕм шайри влаç органĕсен тĕп тĕллевĕ пурнăç пахалăхне ӳстересси пулнине аса илтерчĕ.

"Юлашки çулсенче пысăк ĕç пурнăçланă, çапах шалти резервсемпе вăй-хăват татах пур. Чăваш Енĕн малашнехи ăнăçлă аталанăвĕн тĕп ресурсĕ – çынсем, ĕçлеме пĕлекеннисем тата çитĕнӳ тăваканнисем", – терĕ республика Пуçлăхĕ.

■ **И.НИКОЛАЕВА**

Пĕтĕм тĕнчери фестивале хутшăннисемпе тĕл пулнă

Çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Росинка» физкультурăпа сывлăх комплексĕнче пулнă. Унта вăл Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен МИХĕсен, киностудийĕсемпе фотоклубĕсен «Атăл тăрăхĕнчи тĕл пулусем – 25» фестивальне хутшăннисемпе тĕл пулнă.

Республика Пуçлăхĕ ăсталăх класĕсене çитсе курнă, фестивале хутшăннисемпе каласнă, вĕсен ыйтăвĕсене хуравланă. Çамрăк журналистсене тем те кăсăклантарнă: ача çулĕсенче Михаил Игнатьев мĕнпе интересленнĕ, кам пулма ĕмĕтленнĕ, камран тĕслĕх илнĕ? Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăйĕн ачалăх çулĕсенче Интернет сечĕ пулманнине, çавăнпа информаци паянхи пек хăвăрт илейменнине палăртнă. Профессине вăл ашшĕ-амăшĕн ĕçне пăхса суйласа илнĕ. «Аттепе анне – ял ĕçченĕсем, эпĕ агроном пулма, çĕр çинче ĕçлеме ĕмĕтленеттĕм», – тенĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăй космос паттăрĕнчен Андриян Николаевран тĕслĕх илнине пытармасть.

сар.ru сăн ўкерчёкĕ

Пĕрремĕш канал журналисчĕ Михаил Верещагин пултарулăхпа хастарлăх вăрттăнлăхĕпе паллаштарма ыйтнă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, япăх шухăшсене сирме, спортпа туслашма, ирхине те пулин зарядка тума, çĕр çинче ĕçлеме суннă.

«Атăл тăрăхĕнчи тĕл пулусем – 25» фестивале хутшăннисем Чăваш Республикин Пуçлăхне тарават пулнăшăн, ăшшăн йышăннăшăн тав тунă. Юбилей фестивальне Раççейĕн 50 регионĕнчи, çавăн пекех Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхне кĕрекен çĕр-шывсенчи 400 яхăн çамрăк хутшăннă.

■ **А.ЛЬВОВА**

Тĕплĕнрех

Крым Чăваш Енрен тĕслĕх илет

Нумаях пулмасть республика статусĕпе Раççей тытăмне кĕнĕ Крым Чăваш Енрен тĕслĕх илет тени пĕртте ӳстерсе калани мар. Çакна тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать.

ЧР Патшалăх Канашĕ йĕркеленнĕренпе 20 çул çитнине халаллăнă наука-практика конференцийĕнче РФ Патшалăх Думин Информаци политики, информаци технологийĕсем тата çыхăну енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ Валентин Шурчанов каланипе эпир иртнĕ номерсенчен пĕринче паллаштарнăччĕ. «Канаш» сăмах чăвашшăн чăннипех пĕлтерĕшлĕ пулнине кура хăй вăхăтĕнче республика парламентне «Патшалăх Канашĕ» ят панă. Унтан пирĕн тĕслĕхпе тутарсем, удмуртсем усă курнă, вĕсен саккун кăларакан аслă органĕсем те – Патшалăх Канашĕсем. Халĕ ав Крым парламенчĕ те – Патшалăх Канашĕ.

Çапах Чăваш Енпе пĕрешкелли ку çеç мар-мĕн. Асăннă конференци хăнасем те килнĕччĕ, вĕсен йышĕнче Тутар Республикин Патшалăх Канашĕн Саккунлăх тата право йĕрки енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ, юридици наукисен кандидачĕ Шакир Ягудин та пулчĕ. Вăл Мускав специалисчĕсемпе пĕрле ака уйăхĕнче Крымра ĕçленĕ-мĕн, çак республикăн Конституцине хатĕрлеме хутшăнать.

Шакир Шахмедович каланă тăрăх – федерацин çĕнĕ субъекчĕн Тĕп саккунне хатĕрлемешкĕн Чăваш Ен Конституцийĕпе усă кураççĕ, унтан чылай статьяна илнĕ. Редакцилесе те тăман-мĕн. «Çакă мана тĕлĕнтерчĕ те. Ку, паллах, хăй вăхăтĕнче чăваш парламентарийĕсем хăйсен Конституцине хатĕрленĕ чух питĕ тĕплĕ ĕçленине кăтартать. Конституцири йĕркесем питĕ уçăмлă, пĕтĕмпех питĕ лайăх, кĕскен палăртнă», – терĕ Ш.Ягудин.

Уйрăм самантсене илес тĕк, сăмахран, Крымсене Чăваш Ен Конституцийĕнче çĕнĕрен суйланă парламент суйлав хыççăн 12 кунран ĕçлеме пуçламалли йĕрке килĕшнĕ-мĕн. Сăмах май, Раççей Конституцийĕнче – 30 кун. «Эпĕ «çавнашкал пĕчĕк, 12 кунлăх тапхăр палăртса мĕншĕн хăвăра çирĕп картана хупасшăн?» теме пăхрăм та – пур пĕр килĕшмерĕç, çав-çавах асăннă тапхăра РФ Тĕп Саккунĕнче палăртнинчен пĕчĕкрех, Чăваш Енрине çывăхрах тăвас терĕç – 14 кун», – терĕ Тутарстан парламенчĕн представителĕ. Çавăн пекех пирĕн Тĕп Саккунăн Чăваш Ен социаллă патшалăх пулнине палăртакан положенийĕсем те Крым Конституцине кĕреççĕ-мĕн.

Крымри пĕтĕмĕшле ларутăрăва хакланă май вара Шакир Шахмедович çапла каларĕ: «Паллах, вĕсем 23 çул урăх тытăмра пурăннă та – пĕтĕмпех самантрах йĕркеленсе çитеймĕ. Анчах Раççей тытăмне кĕнĕ май унта пурăнакансем Раççей регионĕсемшĕн хушма йывăр тиев пуласшăн мар, хăйсен ыйтăвĕсене хăйсем тĕллĕнех татса пама ăнтăлаççĕ».

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Аслă Çĕнтерӳ

«Вилнĕ» тесе çырманни шанчăк паратчĕ

Пирĕн килтен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине виççĕн тухса кайнă: атте тата икĕ пиччĕ. Шăписем элчел килсе тухрĕç. Юрать-ха, аслă пиччем Андрей чĕрĕ-сывă юлнă. Аттепе пиччĕ Василий тăшманпа çапăçса паттăрлăх кăтартнă. Шел, çулĕсем тăван киле выртмарĕç. Андрей вăрçă хыççăн Украинăри Донецк хулинчи завода вырнаçнă та унтах тĕпленнĕ, çемье çавăрнă. Кĕçĕн пиччĕ Ваçут /килте ăна çапла чĕннĕ/ 1943 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче хыпарсăр çухалнă. Çапла çырнă хут анне чунне ĕмĕрĕпех асаплантарчĕ: «Ăçта аманса выртса юлчĕ-ши? Мĕнле асапланса вилчĕ-ши? Тискер кайăксем çисе ячĕç-ши? Виличчен «анне» тесе миçе хут чĕнчĕ-ши?..»

«Вилнĕ» тесе çырманни хурлантаратчĕ аннене, шанчăк та парса тăратчĕ. Чылай çул иртсен те ывăлне кĕтме пăрахмарĕ. Хăй çут тĕнчепе сыв пуллашас кун умĕн кăна çапла каларĕ:

– Нумай кĕтрĕм сана, ывăлăм. Анчах мана пытарма çитеймерĕн. Вилĕмрен çăлăнаймарăнах пулĕ çав. Тирпейлесе пытаракан та пулмарĕ ахăртне. Халĕччен шăмму витĕр курăк та шăтрĕ пулĕ...

Кам пĕлет, амăшĕн чĕри сисет теççĕ те, пиччене пытаракан, тен, чăнах та пулман. Ваçутăн çапăçава кĕрес умĕн янă пĕр çырăвĕ кăна упранса юлнă: «Тăраниччен çисе курман, выççас вилетпĕр. Укçа пулсан та нимĕн те тупса илме çук кунта...» Ăна 1943 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче çырнă. Хыпарсăр çухални çинчен 1943 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче пĕлтернĕ.

Атте çинчен «Ас тăвăм» кĕнекере çапла çырнă: «Семен Михайлович Волков кĕçĕн сержант, 1897 çулхи кăрлачăн 24-мĕшĕнче çуралнă. 1943 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче çапăçура вилнĕ. Смоленск облаçĕнчи Сычево районĕнчи Жеребцово ялĕнче пытарнă».

Аттене ас тумастăп. Хĕсметрен янă икĕ çырăвне упратпăр. Пĕрне 1942 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнче çырнă. Хăйсем Мускавран 85 çухрăмри Дорохово станцийĕнче тăнине, мотострелоксен 5-мĕш бригадин 1-мĕш батальон йышĕнче пулнине пĕлтернĕ.

Тепĕр çыруне 1942 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче çырнă. Унта çакăн пек йĕркесем пур: «... манпа пĕрле пĕр чăваш та çук. Пурте тенĕ пек çамрăк. Кампа та пулин тăван чĕлхепе чун каниччен ларса каласнă пулăттăм».

Анне манăçми мăшăрĕн вил тăприйĕ çине çав тери кайса килесшĕнччĕ. Илсе кайса кăтартаймарăмăр. Кашни кун ĕçре. Çавăнпа та пĕлтĕр Смоленск облаçĕнчи Сычево районне кĕрекен Жеребцово ял тăрăхĕн администрацине çыру ятăм. «Сирĕн ялта вăрçă вăхăтĕнче вилнĕ салтаксене пытарнă тăванла масар пур-и тата унта ман аттене пытарнипе пытарманнине пĕлме пулать-и?» тесе ыйтрăм. Тĕрĕссипе, хурав килессе шанманччĕ. Килчĕ вĕт. Макăрамакăра вуларăм. Питĕ тĕплĕн хуравланă. Кĕскетсе те пулин ăна вулакан патне çитерес кăмăл пысăк.

«Хисеплĕ Роза Семеновна! Сирĕн çырăва Сычево районĕнчи Хлепень ял тăрăхĕн администрацийĕ хуравлать. Пирĕн тăрăхра хăй вăхăтĕнче хĕрӳ çапăçусем пынă. Ăна ахальтен мар «Вилĕм айлăмĕ» тесе каланă. Унта Совет Çарĕн çĕр-çĕр салтакĕ пуç хунă. Вăрçă хыççăн тĕрлĕ масарти салтаксен юлашкисене /вăл шутра – Жеребцово ялĕнчине те/ Аристово ялĕнчи тăванла масарта тепĕр хут тирпейлесе пытарнă. Жеребцово халĕ çук, тахçан пысăк ял пулнă Аристовăра та 8 çын кăна пурăнать. Пуç хунисен тăванĕсемпе çывăх çыннисем килсе тăраççĕ, кунта пытарнисен ячĕпе асăну паллисем вырнаçтараççĕ. Вилнисен пĕтĕмĕшле списокĕ çук. Шел, çакна чылай маларах йĕркелемелле пулнă та. Вил тăприсене тирпейлесех тăратпăр.

Вилнисен йышĕнче сирĕн açăр хушамачĕ те пур. Аристово ялĕнчи тăванла 4-мĕш масарта пытарнисен шутĕнче 612-мĕш номерпе çырнă. Вăл 1943 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче мар, кăрлач уйăхĕн çав кунĕнче вилнĕ. Урăхла пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен авăн уйăхĕнче пирĕн тăрăхра çапăçусем текех пыман... Сире хисеплесе Е.А.Садова инспектор».

Вырăнти çынсене масарсене тирпейлесе, илем кĕртсе тăнăшăн чĕререн тав тăватăп.

Смоленск çĕрне тăшманран тасатнă чухне Вăрнар районĕнчен фронта кайнă 200 ытла çын пуç хунă, вĕсенчен 22-шне Сычево районĕнче пытарнă. Красноармейски /139 çын вилнĕ, 6-шĕ çак районти масарта ĕмĕрхи канлĕх тупнă/ тата Элĕк /кунти масарта 13-шне пытарнă/ районĕсен çыннисем те пур.

Аттепе пĕр çава çинче выртакансем: Вăрнар районĕнчи Чалăм Кăкшăм ялĕнче 1923 çулта çуралнă Василий Захарович Захаров /1942 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче вилнĕ/, Элĕк районĕнчи Кивуй ялĕнчи Макар Терентьевич Башкинов /1907–14.12.1942/, Çĕмĕрле районĕнчи Кĕçĕн Тăван ялĕнчи Виссарион Васильевич Филиппов /1911–04.11.1942/.

Мĕншĕн çыртăм çакна? Атте «пĕрре хăть ларса каласасчĕ тăван чĕлхепе» тенĕрен. Аттепе юнашарах чăвашсем те пулнă иккен, анчах вĕсем пĕр-пĕрин çинчен пĕлмен. Пĕр район территорийĕнчех тăшманпа вун-вун чăваш çапăçнине пĕлсе тăнă тăк йывăр та хăрушă вăхăтра вĕсене чылай çăмăл пулаттăх.

■ **Роза ВОЛКОВА.**

Вăрнар районĕ,
Калинино сали

Атте мĕн калĕччĕ-ши?

Атте, Александр Максимович Максимов, 1916 çулта Тăвай районĕнчи Кивĕ Пуянкасси ялĕнче ĕçе юратакан йышлă çемьере çуралнă. Пĕтĕмпе – 9 ача, вĕсенчен 8-шĕ чиперех ура çине тăнă. Атте – чи кĕçĕнни. Аппăшĕсем 90 çула çитиччен пурăннă. Альтӳк аппа вара 98 çула çитсе вилнĕ. Асаттепе асанне тата аппăшĕсем аттене мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратма, çынна хисеплеме, ялан пулăшма вĕрентнĕ.

1941 çулхи çĕртме уйăхĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан аттене ялти вăй питти арçынсемпе пĕрлех вăрçа илсе кайнă. Анчах та хаклă çыннăмăр фронтран хăрах аллине çухатса таврăнчĕ. Мирлĕ ĕçе кӳлĕнсенех халăх ăна «Социализм» колхоз председательне суйланă. Вăл вăхăтра уйхирпе фермăра салтак арăмĕсем, ватă çынсемпе ачасем кăна ĕçленĕ. Пĕтĕмпех алăпа тумалла, лашасене вăрçа ăсатнăран вĕсем пачах пулман та. Хĕрарăмсем вăкăр кӳлсе кĕлте, утă-улăм турттарнă. Çуллахи вăхăтра ялти ача-пăча уйра çум çумланă. Шкулта вĕренекенсем уроксем хыççăн пучах пухса чăх фермине леçнĕ. Колхозра ун чухне чăх, сысна, сурăх, ĕне, лаша нумай тытнă.

Кăштах аслăрах ачасем утă-улăм пухнă çĕрте ваттисене пулăшнă, амăшĕсемпе пĕрле юнашар тырă вырнă. Атте тăрăшнипе, çынсене ĕçлеттерме пĕлнипе тăван хуçалăх кăтартăвĕсем лайăхланнă, тыррипуллине пӳлмене хывнă, аш-какай туса илмелли плана та тултарма тăрăшнă. 1944 çулхи çĕртме уйăхĕнче атте ячĕпе Мускавран Сталин алă пуснă тав сăмахĕсемлĕ телеграмма килнĕ. Ку пуриншĕн те пысăк савăнăç пулнă.

1955 çулта колхоз пысăк тухăçлă куккурус çитĕнтерчĕ. Эпир, çамрăк хĕр ачасемпе арçын ачасем, лашапа «уй-хир пикин» пуссинче вăй хунă. Атте ун чухне бригадирта ĕçлетчĕ, уншăн Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх куравне кайма тивĕçрĕ.

Нимĕç фашисчĕсене тĕппипех çапса аркатнă хыççăн ялта пурнăç самаях аванланнăччĕ. Çутă тата радио кĕртнĕччĕ. Радиопа тăтăшах çĕнĕ юрă янăратчĕ. Эпир çав юрăсемпе ӳсрĕмĕр. Паянхи кун та юрлатпăр. Анчах та ялти радиоточкăсем кама кансĕрлерĕç-ши? Шупашкартан паракан кăларăмсене халĕ ялти халăх итлеймест. Чун ыратать. Çапăçу уй-хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунисене тепĕр хут чĕртсе тăратма май пулсан паянхи пурнăç пирки вĕсем мĕн калĕччĕç-ши? Колхозри машинатракторсене сутса, вылăх-чĕрлĕх фермисене юхăнтарса, аркатса пĕтернĕ. Ялти вăй-питти çынсен ăçта тата кам пулса ĕçлемелле-ши?

• А.Максимов /1960 çулхи сăн ўкерчĕк/.

Ялта хăйне хисеплекен, ачисене тĕрĕс воспитани парса, вĕрентсе çын тăвас текен чылай-ха. Анчах та пĕрисем Мускава ĕçлеме çӳрени, теприсем ĕç çуккине пула хăватлă шĕвекпе туслашни кăмăла хуçать.

■ **Галина МАКСИМОВА,**
пенсионерка.

Тăвай районĕ,
Кивĕ Пуянкасси ялĕ



Экологи кăларăмĕ

Çут çанталăк

Пултаруллисем валли – хисеплĕ ят

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер 60-мĕш Указа алă пуснă. Çут çанталăка сыхлассин пĕлтерĕшне ÿстерессишĕн, тавралăха, çут çанталăк пуянлăхне упрассишĕн, сыхлассишĕн вăй хуракансен ĕçне тивĕçлипе хаклас тĕллевпе республикăн патшалăх наградине – «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ экологĕ» хисеплĕ ят – çирĕплетнĕ. ЧР Министрсен Кабинетне «Чăваш Республикин «Чăваш Республикин патшалăх наградисем çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун проектне хатĕрлеме хушнă. Ăна çитес сессире йышăнма ЧР Патшалăх Канашне çитерĕç. Указ пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

■ **М.ЮРЬЕВ**

Çыру йĕрĕпе

Кĕлешмĕш хĕрринчи хурăнсем

Канаш районĕнчи Анат тата Тури Сурăм, Кăшнаруй ялĕсен хушшинчи вунăвун пилĕк çухрăма тăсăлакан вăрман тăрăхне «Правда» колхоз ĕçченĕсем 40-50 çул каялла лартса килес ăрушăн пысăк ĕç тунă.

Çырма-çатрана шыв ишесрен сыхлать, кислород кăларать, ял-йыша ешĕллĕхпе савăнтарать. Кăнтăр енчен хĕвел анăçнелле пуçа çавăрса çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕре, инçете, тĕсесе пăхрăм та – ума тĕлĕнмелле илемлĕ тавралăх тухса тăчĕ: кăн-кăвак тÿпе, шерепеллĕ, папаканнă, çулçă çурма ăшă кун кĕтекен шап-шурă хурăнсем, суха тăвакана кĕтекен уй-хир, йĕкел шăрши сарнă ем-ешĕл хырлăх, шыв-шурта апатланакан кайăк кăвакалсем...

Анат Сурăмра çуралса ÿснĕ, Тăван çĕр-шыва тăшманран хÿтĕлесе хаяр çапăçура йывăр аманнă хыççăн 1943 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче госпитальте куç хупнă Кĕçтук Кольцов сăвăç çак илеме савса 1937 çулта шур хут çине çапла шăрçаланă:

Çут Кĕлешмĕш хĕррине анатăп,
Валак çийĕн сывлăм пĕрĕхет.
Ак уяв пуçларĕçĕ хавассăн
Пирĕн ялăн савнă хĕрĕсем...

Пĕр хушă «Правда» колхоза ертсе пынă Сергей Русаковпа Кĕçтук çуркунне лапталла вылянă ял пуçĕнчи тÿремрен Кĕлешмĕше антăмăр. Вăл та çамрăксемпе айлăмра, юхан шыв хĕрринче, иртнĕ вăйăра савăннă. Юрăкĕвĕ ахрăмĕ авкаланчăк çырмапа Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев çуралнă ик-виç çухрăмри Кăшнаруй ялнех çитнĕ.

Г.Иванов фермер ĕнисене шăваракан пĕве урлă каçрăмăр. «Вăл çырмана пÿлме тăм-хăйăр хысакран кăларса саккуна пăсрĕ, – терĕ Сергей Васильевич. – Патшалăхăн тивĕçлĕ органĕ ăна çырана пăсма ирĕк паман».

«Выльăха тапăрта яланах шыв кирлĕ, – каласрăм унпа. – Унсăрăн ĕне сĕт антармасть. Фермер хĕрĕхе яхăн ĕне выльăх усрани, темиçе çынна ĕçпе тивĕçтерни аван, çут çанталăк пуянлăхĕпе усă курасси çинчен калакан саккуна пăхăнманни начар».

«Эпĕ кунтан темиçе çухрăмри Пайкилт ялĕнче çуралса ÿснĕ, – сăмаха тăсрĕ Анат Сурăмра нумай çул пурăнакан ĕç ветеранĕ. – Ку – манăн тăван тавралăх. Ăна сăтăр кÿрекенсен умĕнчен куçа хупса иртейместĕп. Виçĕ çул каялла мана çак хурăнсене каснине систерчĕç. Камсем? Халĕчченех пĕлместпĕр. Ял тăрăхĕн пуянлăхне тăкак кÿнĕ пулин те сăтăрçăсене халĕчченех шыраса тупса явап тыттарман. Эпĕ усал хыпара илтсенех бензопăчкă хуçаланнă вырăна çитрĕм. Ура тупанне хуплакан пир кĕпеллĕ чăваш хĕрне-хĕрарăмне аса илтерекен шап-шурă хурăнсене тÿнтернĕшĕн питĕ тарăхрăм. Полиция, прокуратурăна пĕлтертĕм, айăплисене явап тыттарма ыйтрăм. Хăйсем патне чĕнсе илсе каласмарĕç, яла çитсе манпа тĕл пулмарĕç, пĕр йывăça та касман тесе хурав пачĕç».

Пĕверен каçсанах вĕрене тункати курăнчĕ. Темиçе çул каяллах каснăскер. Ик-виç çĕр метр тăвалла хăпарса çамрăк ĕшнене кĕтĕмĕр. «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕре сухаламарĕç те – хурăнсем вăрăран шăтса ÿсрĕç, – аллине суллакаларĕ çулташ. – Çынсем кунта кăмпа татаççĕ, милĕк касаççĕ. Ĕлĕк тырă, ытти культура çитĕнтернĕ».

Тăватă хутлă çурт çÿллĕшне кармашакан хурăнсен хушшипе Тури Сурăм еннелле утрăмăр. Çитĕнекен йывăçсемпе юнашарах – вун-вун тунката. «Эпĕ утмăла яхăн шутланăччĕ», – хуравларĕ çут çанталăк хÿтĕлевçи.

Акă тата иккĕ. Тункатасенчен хурăн сĕткенĕ сăрхăнатчĕ. «Ахăртнех, пĕлтĕрхи кĕркунне е юр ларсан тÿнтернĕ», – сăмахларĕ çыру авторĕ. «Тăкак кÿнĕшĕн айăплисене штрафласан хурăнлăха ура ярса та пусмĕччĕç. Явап тыттарманнине кура иртĕхеççĕ», – терĕм ăна.

Вар хăмăшланчĕ, курăкланчĕ, хăях хушшипе çурхи шыв йăлтăртатать. Икĕ енчен тăпрана бульдозерпа тĕрттерсе выльăха шăварма пÿлнĕ пĕве пуçне ура ярса пусрăмăр кăна – тăватă кăвакал сывлăша çĕкленсе куçран çухалчĕ. «Пĕве темиçе çул каялла çеç тулличчĕ, – каласрĕ ветеран. – Шыв пуçĕ урлă ан кайтăр тесе витĕр виçĕ пăрăх хунă. Вăрăсем пĕрне тракторпа турттарса кăларса тиесе кайнă».

Шыв пăрăх çурăкĕпе тăпрана юхтарса çурса аннă, пĕвене татнă. Тарăн çурăлчăка пула шыв тĕпĕнче кăна. Çулла выльăха шăвармалăх та пухăнаймĕ. Пĕве пуçĕнчен икĕ пăрăх вĕçĕ курăнать. Кукăр алăсене тупмасан вĕсене те çĕр çăтасси пур.

Телефонпа Канаш вăрманлăхĕн директорĕпе Дамир Юнусовпа çыхăнтăм. «Унти хурăнсем Канаш вăрманлăхĕн территорине кĕмеççĕ, – терĕ вăл. – Вĕсемшĕн вăрманлăх явапла мар». Йывăçсене Кăшнаруй ял администрацийĕн пăхса тăмалла, вăрлакансене полиция тыттармалла.

Тахçан вăйлă çилпе тырă хумханнă уйри çĕнĕ икĕ ката витĕр тухса Утюг ятлă пĕве урлă каçнă чух сип-симĕс хырлăх çумĕнчи шывра тăватă кăвакал нарт-нарт турĕ те çатăл-çатăл вĕçсе хăпарчĕ, пĕве таппинелле кайса çухалчĕ. Сылтăм çыранра – тавралăх илемне яракан йăлари хытă каяш куписем. «Тахçан ялсенчен турттарса килсе тăкнă, – ăнлантарчĕ канăççăр эколог. – Пĕвене сăнсăрлатнине республикăн Çут çанталăк министерствине çыру çырса пăхрăм. Вара ăнăртапăра бульдозерпа сапаласа хĕвел питтине тасатам пекки турĕç. Унтанпа татах тултарнă ав».

Хăш-пĕр çемьен саккун уменчи явапсăрлăхĕ тата ял администрацийĕ влаç тилхепине пушатни çак купасенчен те курăнать.

Яла кĕретĕп. Униче...
Ялах-ши ку, пахча-ши?
Ем-ешĕл йывăç çулçисем
Салам калаç ачашшăн, –

вулатăп Кĕçтук Кольцовăн «Çуралнă ял» сăввине /1941 ç./.

Анат Сурăма сăвăç ячĕллĕ урампа кĕтĕмĕр. Вăл çуралнă çурт вырăнĕнче – тахçанах урăх çемье. Хĕвелпе çуталса выртакан пуш кĕленчесем çеç яла тĕксĕмлетеççĕ. Эрехне ĕçсе янă хыççăнах вĕсене хапха урлă вăркăнтараççĕ-мĕн.

Республикăри нумай ял таврашĕнче, çырма-çатрара е çыран хĕрринче – вăрман тăрăхĕ. Унăн уссине ял çынни лайăх пĕлет. Ăна сайралатма е пĕтерме парар мар, юнашар çуллен хунав лартса хушар.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

Хăтлăх

Чĕр чуншăн «Сăрçи» – çăлăнăç

"Хыпар" ыйтăвĕсене федерацин çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан "Сăрçи" заповедникĕн ĕçченĕсем хуравлаççĕ.

– Учреждени хÿтлĕхĕнчи чĕр чунсен йышĕ республикăри чĕрлĕх хисепне витĕм кÿреет-и?

– "Сăрçи" Чăваш Ен лаптăкĕн 1,9 процентне çеç йышăнать пулин те унăн лаптăкĕнче республикăри мĕн пур пăшин – 8,5, мулкачсен – 9,8, пакшасен – 7,8, хăнтăрсен – 12,9, хир сыснисен 1,9 проценчĕ пурăнать. Улатăр районĕнчи пĕтĕм енлĕкĕн çурри ытла заповедникре тĕпленнĕ. Çакна республикăн Çунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин 2011-2013 çулсенчи шутлавĕн пĕтĕмлетĕвĕпе çирĕплетнĕ. "Сăрçи" – Чăваш Ен чĕрлĕхне ирĕккĕн ĕрчеме май туса паракан хăтлăхсенчен пĕри.

– "Чăваш вăрманĕ" наци паркĕпе "Сăрçие" çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан коридорĕпе çыхăнтарма тĕллев лартман-и?

– Ăна мĕнле пурнăçласси пирки шухăшлатпăр. Вĕсене сыхлакан лаптăксен йышне кĕртме уйăрса кăларнă чух "Сăрçи" тавра хÿтĕлев унки туса хăварнă. Çывăхрах çунарçăсен Кирери патшалăх саккаслăхне йĕркеленĕ. Паркпа заповеднике хÿтĕлев унки 5-6 çухрăма çывăхлатнă. Унта пăшалпа, йытăпа çÿреме, чĕрлĕхе тытма юрамасть. Ункă çунар объекчĕ шутланакан чĕр чуншăн – çăлăнăç. Паркпа заповедник хушшинчи çунар вырăнĕсем кусан-çÿрене лайăхрах ĕрчеме чăрмантараççĕ.

Парк таврашĕнче те хÿтĕлев унки тăвас тĕллев пулнă. Шел те, ăна пурнăçа кĕртме май килмен. "Сăрçи" Улатăрпа Шăмăршă вăрманĕсенче биохÿтлĕх тума палăртрĕ. Ыйтăва федераци шайĕнче татса парасса шанатпăр. Унта парка, заповедника, вĕсен таврашĕнчи тата хушшинчи лаптăка кĕртесшĕн. Мускавра биохÿтлĕх йĕркелеме йышăнсан паркпа заповедника çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕ çыхăнтарĕ. Вăл чĕрлĕхе ирĕккĕн куçса çÿреме çул ççĕ. Чĕр чуншăн хăй килĕштерекен вырăна куçасси пысăк пĕлтерĕшлĕ.

– Заповедникри чĕр чунсене çуллен шутлатăр-и? Унăн йышĕ пирки мĕн калатăр?

– Кусан-çÿрен ытларах çăвăрланăран, пăруланăран, вĕçен кайăк йышлăрах чĕп кăларнăран хисеп ÿсме е чир сарăлнă пирки чĕрлĕх хухма пултарать. Вăл пĕр çĕртен теприне ушкăнпа куçни те, ăна браконьерсем пĕр шелсĕр пĕтерни те шута чакарать. Заповедникре кăрлач-нарăс уйăхĕсенче çуллен хĕллехи шутлав иртет. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе каярахпа паллаштарăпăр. Кăрлач уйăхĕнче лаптăкра 60 пăшие шута илтĕмĕр. Упа, хăнтăр, хир сыснин, шыв-шур кайăкĕн, ытти чĕрлĕхĕн хисепне палăртатпăр. "Сăрçире" вĕсене пăшалтан персе, кайăкçă хатĕрĕпе усă курса тытма юрамасть. Шутламалли йĕрке сунар вырăнĕсенче усă кураканниех. Кунсăр пуçне сĕтпе тăрантакан ытти вĕт чĕр чунпа вĕçен кайăк-кĕшĕк йышне те картлатпăр.

– "Сăрçипе" юнашар сунар вырăнĕсем хÿтлĕхри чĕрлĕх хисепне пĕчĕклетмеççĕ-и?

– Хÿтĕлев ункинчен чи çывăхри "Люльское" кайăкçă лаптăкĕ заповеднике еплерех витĕм кÿресси ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби унта сунар объекчĕ шутланакан чĕр чунсене çулталăкра мĕн чухлĕ тытма лицензи панинчен нумай килет. Сăмахран, 2012-2013 çулсенчи сунар тапхăрĕнче пăши тытма 2 лицензи çеç уйăрнă. Чĕрлĕх вăрманта этем çÿренине хăвăрт сисет, пăшалтан персе сывлăша кисрентернине инçетренех илтет, хăраса шăплăха – заповедника – кĕрсе тарать. Унта хыçран хăваламаннине пĕлет. Хÿтĕлев ункинчен "Кедр", "Речное", "Алгашинское" сунар лаптăкĕсене çитме 15 çухрăм ытла. Çавăнпа вĕсем заповедникри чĕр чунсене пысăк витĕм кÿреймеççĕ.

– "Сăрçие" туристсене кĕртеççĕ-и?

– Раççей Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви çĕр-шывра 102 заповедникра, 45 наци паркĕнче тата федерацин 70 саккаслăхĕнче çут ĕç туризмне йĕркелеме тĕллев лартнă. Заповедникăн Улатăр тата Патăрьел районĕсенчи уйрăмĕсенче çут çанталăк тусĕсене йышăнатпăр. Иккĕшĕнче те курса çÿремелли сукмак икĕ çухрăма тăсăлать. Пĕлтĕр çамрăксен ушкăнĕ Шупашкартан заповедника çитсе виçĕ кун пурăнчĕ, тĕпчев ирттерчĕ, Сăр юхан шывĕ тăрăх кимĕпе ишсе тавралăха тишкерчĕ.

– Браконьерсем тĕп лаптăкра пăшалтан персе енлĕке вĕлерни пулнă-и?

– Ун пек тĕслĕхе шута илмен. Анчах пăшаллă çынсем хÿтĕлев ункинче – Сăр юхан шывĕн айлăмĕнче – саккуна пăхăнмаççĕ. Пĕр чĕр чуна вĕлернине палăртрăмăр. Ку тĕслĕх тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Айăплине тупса палăртман-ха. Пĕлтĕр хÿтĕлев ункинче административлă йĕркене пăснăшăн 35 протокол çырнă.

– Заповедника федераци хысниччен укçа уйăрасси лайăхланман-и?

– 1990-2005 çулсенчипе танлаштарсан лайăхланнă. Çапах та сотрудниксен ĕç укçи çав-çавах пĕчĕк. Вĕсем учрежденире çут çанталăка, суйласа илнĕ специальноçа юратнăран çеç ĕçлеççĕ.

Евгений ОСМЕЛКИН,
заповедник директорĕ;
Александр ДИМИТРИЕВ,
директор çумĕ;
Александр АЛЕКСАНДРОВ,
ăслăлăх сотрудникĕ.

Тăван тавралăх

Тусăмсем çитрĕç!

2009-2013 çулсенче Канаш районĕнчи Пушарпуçри чĕкеçсен пурнăçне тĕпчерĕм.

Тăван ялăмра 36 пÿрт, 67 çын пурăнать. Ытларахăшĕ карнислă, йывăçран. 2012 çулта 12 ĕнеччĕ. Пĕлтĕр 13 килти хуçалăхра сысна, ĕне, сурăх усрарĕç. Вĕсем ял çыннисене ашпа, сĕтпе тивĕçтернисĕр пуçне чĕкеçсен тĕп апачĕ шутланакан вĕт шăнана ĕрчеме пулăшаççĕ. 2009 çулхи çу уйăхĕн 2-мĕшĕнче Пушарпуçра пĕрремĕш чĕкеçе, тепĕр кун темиçĕшне те курса савăнтăм. Эпĕ çу каçиччен сăнанă мăшăр йăва тума темшĕн кая юлса, çĕртмен 15-мĕшĕнче çеç, пуçларĕ те 5 кунран ĕçне вĕçлерĕ. Тен, малтан вăл урăх кил-çуртра тăрмашнă, каярахпа пирĕн лупасая суйласа илнĕ. Утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче пусмана чалăшшăн тайăнтартăм та йăва пăхма хăпартăм. Унта кĕрен те çара чĕпсемччĕ. Çурла уйăхĕн 6-мĕшĕнче пурте йăваран сиксе тухса вĕçме хăнăхрĕç. Тепĕр эрнерен ашшĕ-амăшĕнчен уйăраймарăм.

2010 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче ялта пĕрремĕш юплĕ хÿрене, тепĕр кун пиллĕкĕн-улттăн электропралук çинче юрă шăрантарчĕç. Пирĕн хуралтăри кивĕ йăвана юсарĕç. Ами 20-мĕшĕнче пĕрремĕш çăмарта хучĕ, темиçе кунта 4 турĕ. Çĕртмен 2-мĕшĕнче иккĕшĕнчен чĕпсем тухрĕç. Виççĕмĕш кун ашшĕ-амăшне сас пачĕç. Сакăр кунран куçĕсем уçалчĕç. Вунă кунран пуçне çĕклесе çирĕп тытма хăнăхрĕç, хÿри шăтрĕ, çунаттисем тĕкленчĕç. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тÿлек те ăшăччĕ. Чĕпсем йăваран вăрлатса тухрĕç. Ама çăмарта иккĕмĕш хут хумарĕ.

Юплĕ хÿре йăви хĕл каçиччен пăрăсран хăпăнса ÿкнĕ пирки 2011 çулхи çуркуннене пăлханса кĕтрĕм. «Кĕрсе пăхĕç те – килĕ çук. Тепĕр çĕре куçĕç», – тесе кулянтăм. Яла çу уйăхĕн 8–10-мĕшĕсенче çитрĕç. Манăн туссем йăва çавăрма каллех кая юлса, çĕртмен 2-мĕшĕнче çеç, тытăнчĕç. Ама 5 çăмарта турĕ. Утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче чĕпсем сывлăшра вăр! та вăр! çаврăнчĕç.

Ял чĕкеçне 2012 çулта республикăра акан 24-мĕшĕнче кĕтсе илнĕ. Пушарпуçра çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче пуçласа куртăм. Пĕр мăшăр çу каçиччен чĕп икĕ хут кăларчĕ.

2013 çулта яла акан 30-мĕшĕнче çитрĕç. Çанталăк ăшă та типĕччĕ. Эрнерен кивĕ йăвана юсарĕç. Çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче унта – 1, тепĕр кун – 2, 19-мĕшĕнче 6 çăмартаччĕ. Çĕртмен 23-мĕшĕнче чĕпсем йăваран пĕрин хыççăн тепри вăркăнса тухрĕç те тÿпене çĕкленме хăтланчĕç. Анчах нумай хăпараймарĕç, урамри йывăçсенчен аяларах вĕçсе çÿренипех çырлахрĕç. Йăвара мар, лупас айĕнчи кĕрепле шăлĕсем çинче иккĕмĕш çĕр каçрĕç. «Тен, йышлă çемьене йăвара тăвăр?» – шухăшларăм эпĕ.

Ашшĕ-амăшĕ ирхи 5 сехетрен пуçласа вĕт шăна хăваларĕ. Чĕпписем сывлăша пĕр эрне 7 сехетре çеç çĕкленчĕç. Çемье хăварнă йăвана çĕртмен 26-мĕшĕнче тепĕр мăшăр йышăнчĕ. Пусмапа васкаса хăпартăм та пĕрремĕш çăмартине асăрхарăм. Утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче 5 шутларăм. Ама куллен 6-7 сехетре çăмарта хучĕ. Йăвара 15-мĕшĕнче – 3, 16-мĕшĕнче 5 чĕпчĕ. Çурлан 5-мĕшĕнче пурте тÿпере явкаланчĕç. Авăнăн 6-мĕшĕччен кăнтăра ăсанчĕç.

2012 çулта – 15, пĕлтĕр 13 килти хуçалăхри сарай-лупасайра, пÿрт çамкинче йăва çавăрса чĕп ÿстерчĕç. Емельяновсен крыльца тăрри айĕнче 2 йăваччĕ. Пĕр мăшăрĕ иккĕмĕш пуслăх çитĕнтерме инкек пулассине ăнкармасăрах электропралукран тăм йăва çакнă. Анчах кĕрен-тухан крыльца алăкне уçнă-хупнă чух силленнĕрен вăл çĕре ÿкнĕ. Тăватă çăмартинчен чĕп тухса çитĕнеймерĕ. Ачасем питĕ пăшăрханчĕç.

Ял чĕкеçĕ выльăх усракан, хуралтă алăк-чÿречине яри уçса тăракан çынсем патĕнче кăна йăва çавăрать. Вăтамран 0,93 ĕне выльăх пуçне пĕр мăшăр тиврĕ. Шкул тарасипе çăмартине виçрĕм: 2,2 грамм тайрĕ. Чĕпсем çăмартаран пĕр-икĕ талăкра тухаççĕ. Пĕрремĕш хут пусса ларнă хыççăн – 93, иккĕмĕшĕнче 85,2 проценчĕ çунатланаять. Иккĕмĕшĕнче йыш сахалрахине ама çăмартасене темле сăлтава пула чĕпсем тухичченех ăшăтма пăрахнипе ăнлантармалла.

■ **Татьяна ПЕТРОВА,**
Канаш районĕнчи Шуркасси шкулĕн вĕренекенĕ

Çырмасене ешĕллентермелле

Этемлĕх Çĕр чăмăрне сăтăр нумай кÿнĕ. Çавна пула çут çанталăк та улшăннă.

Ĕлĕк кашни ял таврашĕнчи вăрман нÿрĕк тытнă, çĕр айĕнчи шыв шайĕ хальхинчен чылай çÿлерех тăнăран унтан та кунтан çăл тапнă, тымар çырмана ишĕлме паман. Чĕр чун, вĕçен кайăк пайтах ĕрченĕ.

Вăрмана пĕтерсен тавралăха çĕр-çĕр тĕлтен шыв çурса юпăлантарнă. Çĕр айĕнчи шыв шайĕ чакнă, çăл куçсем хупланнă, улăх-çаран сахалланнă, çулла çырмасем шывсăр юлнă. Йывăççăр хăварнă çĕрте чĕр чун, вĕçен кайăк юлман. Вăрнар, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Пăрачкав, Улатăр, Комсомольски, Патăрьел, Шăмăршă районĕсенче çеç сĕм вăрман упраннă. Вĕсем чĕрĕлĕхпе, ÿсен-тăранпа, кăмпа-çырлапа халĕ те пуян.

Çуллен сывлăша этем сывлăхĕшĕн сиенлĕ япаласем /çĕр-шывра пурăнакан кашни çын пуçне вăтамран 100 кг ытла/ Раççейри промышленноç предприятийĕсенчен, çурт-йĕре газпа, ытти материалпа хутса ăшăтмалли котельнăйĕнчен – 19 млн, автотранспортран 11 млн тонна кăларса яраççĕ. Вĕсенче – этем организмне наркăмăшлантаракан çĕр ытла хутăш. Нумайăшĕ тавралăха производствăра инкек пулнă хыççăн лекет. Çулталăкра 110 пин тонна фенол, спирт, бензол, хлор, аммиак, çуллă кислотасем, хими хутăшне ирĕлтерекен япаласем пăсланса атмосферăна лекеççĕ. Унта таса мар япаласен газĕ пуçтарăнать. Озон сийĕ çуллен 0,5% «çÿхелет». Çав хутăшсем ÿсен-тăраншăн та сиенлĕ. Хими витĕмне пула эмел курăкĕ, пахча çимĕç, улма-çырла наркăмăшланаççĕ. Паллах, вĕсене çиме юрамасть.

Тĕпчевçĕсем ÿсен-тăран наркăмăшланнăран, çанталăк улшăннăран, этем хÿтĕлеменрен чĕр чунсен чылай тĕсĕ пĕтессе пĕлеççĕ. Хăрушă сехмет çут тĕнчене халех шар кăтартать: кашни талăкра ÿсен-тăранăн, чĕр чунăн е кăмпан пĕр тĕсĕ çухалать.

Мĕн пур йÿçек газăн виççĕмĕш пайĕ тинĕсе лекет. Çавна пула шыв пахалăхĕ улшăнать, тинĕс чĕрĕлĕхĕн йышĕпе тĕсĕ чухăнланать. Промышленноç вăйлă аталаннă патшалăхсем тинĕсе, çĕр айĕнчи шыва вараласçĕ. Унта тимĕр, фтор, марганец, нитрат, хлорид, сульфат ытлашшипех.

Шыври, çĕрти, сывлăшри сиенлĕ хутăш этем организмне ытларах лекет, çавăнпа халĕ нумайрах чирлетпĕр. Онкологие, аллергие, сывлăш çулĕсен чирне ытларах тупса палăртаççĕ. Кĕскен: тĕнче экологийĕ питĕ начар.

Пĕчĕк Чăваш Ен ăна лайăхлатма нумай пулăшаймĕ. Пирĕн республика çут çанталăкне ырăлатмалла. Сăмахран, ешĕллентермен çырма-çатра пайтах. Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоз председателĕ пулнă Аркадий Айдак пурăннă чух Чăваш Ен çырмисене, вĕсен таврашне йывăç лартса çитĕнтерсен çанталăк улшăнĕ терĕ. Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Çырмасене симĕслентерсен, тымарлантарсан шыв тăпрана сахалрах юхтарса кайĕ, çĕр айĕнчи шыв шайĕ хăпарĕ, пĕве-кÿлĕре, юхан шывсенче чĕр чун, вăрман тăрăхĕсенче вĕçен кайăк хушăнĕ.

■ **Николай ВАСИЛЬЕВ,**
Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕн вĕрентекенĕ

Çыру

Хунав лартар

Эпир «Хыпара» чылай çул çырăнса илетпĕр. Ял пурнăçне çутатса самана улшăнăвне ăнланма пулăшнăшăн тавах журналистсене.

Ăша вăркаттаракан ыйту пур-ха. Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпапа Патреккеле асфальт çул çыхăнтарать. Сылтăм айккинче – ишĕлсе сарăлакан çырма. Ял тата çул патне çитрĕ ĕнтĕ. Вăл ветерансене пăшăрхантарма пуçланăранпа 10 çул ытла. Çав хушăра ял администрацийĕн пуçлăхĕ темиçе те улшăнчĕ. Анчах пĕри те çынсене ишĕлчĕк хĕррине йывăç лартма пухмарĕ. Нимене тухма никам та хирĕç мар. Çывăхри садран е урăх çĕртен хунав кăларса килĕпĕр.

Эпир, пенсионерсем, Валерий Петрова ял çыннисен кулянăвне ăнланать, вĕсемшĕн тăрăшĕ тесе ял тăрăхĕн пуçлăхне суйларăмăр. Вăл йывăç лартма ял-йыша пуçтарасса шанатпăр.

■ **В.АНТОНОВА, Р.КУЗЬМИНА, В.КОЗЛОВ, Л.ИВАНОВА, АРБУЗОВСЕМ**

Хытă саслă, асăрханнăллă

Карăш /коростель/ шыв-шур таврашĕнчи улăх-çаранра, хăвалăхра е тĕм хушшинче йăва çавăрать.

Пĕлтĕрхи утă уйăхĕнче Шупашкар вăрманлăхĕн Сосновка уйрăмĕнчи Акăшсен пĕчĕк кÿлли çумĕнчи ешĕллĕхре унăн «юррине» итлесе савăнтăм. Вăл тырă пуссинче те, нумай çул çитĕнекен курăк лаптăкĕнче те чĕп кăларать. Йывăçсене тÿнтернĕ прачакра, уçланкăра курăнкалать. Çапах та уçă çĕрте йăва тумасть. Шурлăха кĕмест пулин те нÿрĕ вырăна юратать. Йăвине икĕ шитрен лутра та çăра мар курăк хушшинче майлаштарать. Унта чĕпсене хăйĕн хыççăн ертсе çÿреме, хурткăпшанкă тупма меллĕ.

Республикăна ака уйăхĕн вĕçĕнче – çĕртмен пĕрремĕш çурринче вĕçсе килеççĕ. Аçи йăх тăсма хăтлăх суйласа илет те амине йыхăрма тытăнать. «Юррине» 21-4 сехетсенче «шăрантарать». Çĕрĕпех: «Кĕрĕкс-кĕрĕкс-кĕрĕкс!» – тесе хыттăн кăшкăрать. Тепĕр чух урăхларах сас та парать.

Икĕ аçана сăнарăм. Кашни вăтамран 25 пин тăваткал метр лаптăк йышăнчĕ. Унта ют аçа карăша кĕртмерĕç. Мăшăр шырăнă чух талăкăн 20-25 процентне вĕçĕмсĕр «юрласа» ирттерчĕç. Ама аçапа тĕл пулма çывхарнине курма тÿр килмерĕ. Кăнтăрла аçа çĕрлехи пек хыттăн сас памасть. Мăшăр тупсанах кăшкăрма чарăнать е тип пыр тĕпĕнчен тухакан сассипе хăйăлтатать.

Ама 7-12 çăмарта тусан пусма ларать. Çу каçиччен тепре пусса кăларнине те пĕрчченех çитĕнтерет. Вăл пусма ларсанах аçа урăх хÿтлĕхе куçса каллех ама ертет, ăна йăхтарсанах çемьерен уйрăлать.

Ама йăвине курăк е тĕм хушшинчи тăпрана 7,5 сантиметр таран чавса тăвать. Унăн сарлакăшĕ 12-15 сантиметр. Çăмартисем кăвак е сарă, хĕрлĕ-хăмăр е шенкер пăнчăллă. Вĕсене 19-20 талăк ăшăтать. Чĕпсем çăмартаран тухсанах йăваран тăрса амăшĕ тавра вĕткеленме пуçлаççĕ. Лешĕ апат тупма вĕрентет. Малтанхи 10-15 кун йăваран 100-200 метра çеç ертсе каять. Чĕпсем каярахпа, хăйсем тĕллĕн апатланма вĕренсен, çемьене пăрахаççĕ. 35 кунран вĕçме хăнăхаççĕ. Ама иккĕмĕш хут пусăрăнса ларас вăхăта ытларах, 15-20 кун, ирттерет.

Утă-çурла уйăхĕсенче аслисем çунат тĕкне тăкаççĕ, вĕçеймеççĕ, тискер чĕр чун çăварне лекесрен асăрханаççĕ. Хурт-кăпшанкăпа тăранаççĕ. Хĕл каçма кăнтăра чÿк уйăхĕччен вĕçсе каяççĕ. Карăш сунар объекчĕ шутланать. Ăна республикăн Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнине пăхмасăрах тытаççĕ.

■ **Анна КОКЕЛЬ,**
Шупашкарти 60-мĕш шкул вĕренекенĕ

Кăларăма Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.

Çивĕч ыйту

Эрех хакне ӳстернипех

Правительство хăватлă эрех хакне кашни çулах ӳстерет. Кăçал та пуш уйăхĕн 11-мĕшĕнчен шур эрех, коньяк хакĕ чылай ӳсрĕ. Тĕллевĕ аван темелле: ĕçкĕçсен йышне чакармалла, çынсене сывă пурнăç йĕркине тытса пыма пулăшмалла. Çаплаччĕ те… анчах хак ӳстернипе ĕçкĕçсен шучĕ чакни сисĕнмест-ха. Эрехпе айкашнине пула çын чирлесси-вилесси чакмасть, преступленисем тума чарăнасси питех палăрмасть. Çапла вара – хак ӳснин усси…

Ĕçке ярăннă çын, сысна хăйне валли пылчăк тупатех тенĕ евĕр, пуçне минретме мĕн те пулин тупса ĕçет: хими шĕвекĕ, сăмакун, йӳнĕпе сутакан суя эрех. Аптекăра та спиртпа хатĕрленĕ шĕвек сахал мар сутаççĕ.

Тепĕр енчен – эрехе алкоголик çеç ĕçмест вĕт. Уявĕ сахал мар: кашни эрнерех /хăшĕнче пĕрре çеç те мар/ професси кунĕсем иртеççĕ, менельник, юбилей... Чей е кофе ĕçнипех уяв ирттерме вĕренеймерĕмĕр-ха, вĕренеес те çук. Ĕçкĕ культури çитмест халлĕхе. Пурнăç пурнăçах: темле те пулать. Шăнса пăсăлсан е урăх чухне хăватлă эрех эмеле те çаврăнать.

Ял-хулара пĕччен пурăнакан ватă нумай, ытларах – хĕрарăмсем. Нумайăшĕн /уйрăмах ял çыннисен/ пенсийĕ – чи пĕчĕк виçелли. Çак укçапа пурăнма питех те йывăр. Килти хуçалăхра вылăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк усрамасан, пахча çимĕç туса илмесен аран сыпăнтаркаласа çеç пурăнма тивет. Карчăксен ирĕксĕрех хуçалăх ĕçĕсене тума çынсенчен пулăшу кĕтмелле. Кӳршĕ-аршă тата ыттисем пулăшмаççĕ тесшĕн мар-ха. Уншăн укçа ыйтакан та сахал. Пулăшнăшăн карчăк кăмăлпах хăналать. Пĕр кĕленче те пулин «çуттине» ыйтмасăрах каларса лартать: пенси пĕчĕк, эрех валли укçа çук тесе нихăшĕ те калас çук. Эрехĕ вара кĕсьене самаях çӳхетет.

Патак икĕ вĕçлĕ. Эрех хакĕ ӳснин ырă енĕ те, ялăххи те пур. Хыснана тупăш кĕни начар мар. Анчах аран йӳнеçтеркелесе пурăнакан çын кĕсйи çӳхелни...

Çивĕч çак ыйтăва эрех-сăра хакне ӳстернипе татса пама çук.

Чи кирли – çынсене ачаран тĕрĕс воспитани парасси çинчен шухăшламалла. Ачасене пĕчĕкрен ĕçе, сывă пурнăç йĕркине хăнăхтармалла. Ача çамрăкранах физкультурăпа, спортпа туслашсан усал йăласен тыткăнне лекес çук. Халĕ çамрăксем ытларах ирĕке юратаççĕ. Ирĕкĕн те виçи пулмалла-çке. Ваттисенчен тепĕр чух: «Эпир пурнăçра тем тĕрлĕ нуша та курнă, ачасем, мăнуксем ыр курччăр хăть», – тенине илтетĕн. Çапла пуль те, сăпкари пек канлĕ кăна пурăнни ырри патне çитермĕ.

Ĕлĕкрех комсомол, пионер организацийĕсем çамрăксене воспитани парас енĕпе сахал мар ĕç тăваттăçç. Пăсăлма пуçлакана часах ушкăнпа ăс кӳнĕ. Халĕ шкул хыççăн çамрăксемпе ĕçлекен сахал. Физкультурăпа спорт аталанма пуçларĕ-ха, усси пурри курăнать. Çапах та çамрăксене те йăнăш çул çине тăрасран хӳтĕлессишĕн сахал тăрăшатпăр: ĕçет-и, çапăçать-и, йĕркене пăсать-и – курмăш пулатпăр, ман ĕç мар тесе хутшăнма хăймастпăр. Çын инкеке лексен тин вăл тахçантанпах çапла хăтланнине аса илсе куляннă пек пулатпăр. Çын майĕпен ĕçке ернине, унăн алли кукăрланма пуçланине «курмастпăр». Курман-илтмен кăмака çинче тенĕ пек. Кашни çын – общество членĕ, апла тăк пĕр çемьери пекех шухăшламалла.

Юлашкинчен çакна каласшăн. Суя эрехпе айкашăкансене полици тупса палăртать-ха. Шĕвеке арестлеççĕ. Суя эрех тăвакан-сутакансем вара пысăк явапах тытмаççĕ: вĕсене пĕр çĕртен хӳтерсе кăларсан тепĕр вырăнта каллех хăйсен ĕçнех тăваççĕ.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ.**
Комсомольски сали

Чăваш фольклорĕн уявĕнче савăннă

"Тăван чĕлхе – халăх историйĕ, тăван чĕлхе – пирĕн халăхăн çутă пуласлăхĕ", – тенĕ чăвашсен паллă этнопедагогĕ Г.Н.Волков.

Тăван чĕлхепе каланă ăшă сăмах кашнин чуннех ăшăтать. Ваттипе вĕттине лăплантарать, çамрăксене малалла талпăнма хавхалантарать. Хăвăн чĕлхӳне хисеплени тăван халăхна хисепленине пĕлтерет. Çакна асрах тытаççĕ Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеçре пурăнакансем.

Çак кунсенче Кивĕ Эйпеçри вăтам шкулта чăваш фольклорĕн уявĕ иртнĕ. Ăна Культура çулталăкне халалланă. Мероприятие ашшĕ-амăшне, ял çыннисене чĕннĕ. Пухăннисене çамрăк ăру чăваш юрри-кĕввипе, ташшипе савăнтарнă. Аслă классенче вĕренекенсем сценкăсем, спектакль сыпăкĕсем, чăваш çамрăкĕсен улахне, вăйăине кăтартнă. Çамрăк артистсем пурте чăваш кĕпи тăхăннă. Шкул умĕнхи ушкăна çӳрекенсем ача-пăча фольклорĕпе паллаштарнă. Уяв пурте пĕрле чăваш ташшине ташланипе вĕçленнĕ.

С.МЕДОВАЯ.

Авланнисем хусахсене çĕнтернĕ

Вăрнар районĕнчи Авшак Элменсем çулсеренех çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче ял çывăхĕнчи улăхра спорт вăйăисем ирттереççĕ.

Кăçал та спорта юратакансем, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансем футболла вылянă. Хальхинче авланнисемпе хусахсем ăмăртнă. Авланнисем правуртарах пулнă, хусахсене 5:0 шутпа çĕнтернĕ.

Волейболистсем те аякра юлман. Ку вăйăра "Туслăх" çĕнтернĕ. Спорт ăмăртăвĕсем вĕçленнĕ хыççăн пурте сĕтел хушшине хашлама ас тивме пуçтарăннă. Уява алла яхăн çын пухăннă. Вĕсем асăннă мероприяти пуçаруçине Владимир Муракова тав тунă, спорт уявне малашне те ирттерме палăртнă.

С.ИВАНОВА.

Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче
***«Хыпара»* 744 тенкĕ те 12 пуспа,**
«Хыпар-шăмат куна»
321 тенкĕ те 96 пуспа çырăнтараççĕ

Тĕслĕх

Паттăрсем – хамăр хушăрах

Чăнах та çапла. Нумай чухне эпир ĕмĕр пĕлекен çыннăн пурнăçне нимĕн чухлĕ те тĕшмĕртместпĕр иккен. Пĕлсен – тĕлĕнетпĕр.

Валерий Анатольевич Кузнецова пирĕн тăрăхра лайăх пĕлеççĕ. Çапах унăн паттăрлăхĕпе пурте тивĕçлипе мухтанмаççĕ-ха. Хăйĕнпе пĕр ӳсĕмрисемшĕн вăл – Валери, çамрăккисемшĕн – тете, çемьешĕн – юратнă мăшăр, атте, кукаçи, тăван тăрăхшăн, çĕршывшăн – паттăр çын.

1959 çулта Паттăрьел районĕнчи Анат Туçа ялĕнче çуралнă Валерий Анатольевич. 8 çулта амăшĕсĕр юлнă. Унсăр пуçне тата виçĕ шăллĕ, чи кĕçĕнни 9 уйăхра çеç. Йывăрлăха кăштах çăмăллатас тесе ашшĕ çулталăкран авланать. Анчах çĕнĕ арăмĕ арçынна хăйсем патне илсе каять. Çук, кайма килĕшмест Валери ашшĕпе пĕрле, килĕнчех асламăшĕпе тата ашшĕн аппăшĕпе юлать. Ăна кура шăллĕсем те. Çапла тăватă ывăла икĕ хĕрарăм ӳстерсе çитĕнтерет. /Каярах пурте аслă пĕлӳ илнĕ: иккĕшĕ – çар çынни, иккĕшĕ – инженер/.

«Асанне анне вырăнĕнче пулнă пирĕн, аппа – атте вырăнĕнче. Аппа çирĕп ыйтатчĕ, асанне çав тери ырă кăмăллăччĕ. Тавах вĕсене пире ӳстернĕшĕн, – тет Валерий Анатольевич. – Пирĕнтен чăн-чăн арçын тăвас тесе хамăр тăван – Совет Союзĕн Геройĕ Павел Ефимович Кузнецов та нумай тăрăшнă. Унсăр пуçне кӳршĕре пурăнакан Петр Иванович Кузнецов ал ĕçне нумай вĕрентнĕ. Колхозра инженер-строительте тăрăшаканскер пире час-часах хăй патне ĕçе илсе каятчĕ, стройка вăрттăнлăхĕсемпе паллаштаратчĕ.

Ун чухне вăрçă ветеранĕсем чылайăн пурăнатчĕç. Эпир вĕсенчен тĕслĕх илеттĕмĕр. Пушă вăхăтра кĕнеке нумай вуланă. Пĕррехинче Николай Чуковскин «Балтийское небо» кĕнекине вуласа тухрăм. Летчиксен пурнăçĕ кăсăклантарчĕ. Çавăн евĕр кĕнекесене татах тупса пама ыйтрăм. Вениамин Каверинăн «Два капитана» романне, Александр Покрышкинăн мемуарне вуласа тухсан çар летчикĕ пулас ĕмĕт çуралчĕ. Кӳршĕ ачипе Валерий Барановпа самолетсемпе планерсен моделĕсене тăваттăмăр, сывлăшра «çапăçусем» ирттереттĕмĕр. Тури Туçа вăтам шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтра çар летчикĕ пулас ĕмĕт çирĕпленсе çитрĕ.

Çак шкулта темиçе ял ачи вĕренетчĕ. Унта пулас мăшăрпа, кӳршĕ ял хĕрĕпе Надя Галкинăпа, паллашрăм. Хамăн ĕмĕте пĕлтерсен вăл ырларĕ çеç.

Анчах медкомисси мана пăрахăçларĕ. Сăмсара чир пур тесе çар институтне вĕренме каймашкăн справка памарĕ. Çакă маншăн мĕн тери пысăк пăшăрхану пулнине никам та ăнланаймасть. Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕтĕм, çулталăкран мана çара кайма май пуррине пĕлтерчĕç. Ку манăн ĕмĕте пурнăçламалли пĕртен-пĕр шанчăк пулнине туйса пĕр сăмахсăрах килĕшрĕм. Çапла эпĕ САЛТАК пулса тăтăм.»

Ленинград облаçĕнчи çар округне, вертолетсене вĕçеве хатĕрлекен механиксене вĕрентнĕ çĕре, лекнĕ вăл. Пултаруллă çамрăка эскадрилья командирĕ тӳрех асăрханă, вĕçев училищине кайма сĕннĕ. Хальхинче çар медкомиссийĕ витĕр чиперех тухнă, экзаменсене ăнăçлă тытса Сызраньти авиаци училищин курсанчĕ пулса тăнă.

«Вертолета пĕрремĕш хут ларсан ку машинăпа ĕмĕрне те вĕçме вĕренейместĕп пуль тесе шухăшланăччĕ. Каярах çакна юлташсене пĕлтертĕм те – вĕсем те малтан çаплах шухăшланине систерчĕç. Пĕрремĕш хут хам тĕллĕн вĕçнине нимĕнле сăмахпа та каласа параймăн. Чĕре юрлать, чун савăнать, сывлăшра хăв хуçа пулнине пĕтĕм тĕнчене пĕлтерес килет», – чунне уçать В.Кузнецов.

1979 çулта, Валери ун чухне иккĕмĕш курсра вĕреннĕ, пирĕн çарсем Афганистанра интернационал тивĕçне пурнăçлама тытăннă. Иккĕмĕш курс курсанчĕсем пурте хăйсене Афганистана яма ыйтса рапорт çырнă, анчах диплом илмесĕр унта яман. «Икĕ курс пĕтерсен кĕркунне отпуск пачĕç. Канма килнĕ чухне яланах Чĕмпĕр хулине чарăнаттăм. Унта ман савнă хĕр Надя ĕçлетчĕ. Хальхинче ун патне чарăнсан çемье çавăрас шухăша пĕлтертĕм. Пире малалла вĕренме Пугачев хулине куçармаллаччĕ. Килĕшрĕ Надя. Ку пурнăçăмри чи телейлĕ самант пулчĕ», – аса илет Валерий Анатольевич.

1982 çулта лейтенант званине илнĕ, Чехословакире хĕсметре тăнă. Çар çавăн пек вăл: вĕçнĕ-вĕреннĕ, вĕреннĕ-вĕçнĕ. 1986 çулта экипаж командирне лартнă ентешĕмĕре. Çийĕнчех Афганистана кайма пĕр эскадрилья хатĕрлеме хушу килнĕ. Ку эскадрилйăна Кузнецов экипажĕ те лекнĕ. Çемьепе сыв пуллашса /ку вăхăт тĕлне Кузнецовсен икĕ хĕр çуралнă/ çемье пуçĕ Узбекистана çул тытнă. Кунта вĕсене çĕрлехи вĕçевсене, çӳллĕ ту çине епле анса ларманнине вĕрентнĕ. Тепĕр икĕ эрнерен Афганистанри Кандагар хулине илсе кайнă. Çак хула çĕр-шывăн кăнтăр районĕнче вырнаçнă. Çурçĕр енче – çӳллĕ тусем, кăнтăр енче – Регистан пуш хирĕ.

«45-50 градус шăрăх. Пире бараксене вырнаçтарчĕç. Кашни пӳлĕмре кондиционер тата телевизор /унпа эпир 1 программа пăхма пултараттăмăр/. Пĕрремĕш кунах каçхи дежурствăна лекрĕм. Аэродром çийĕн 2 пин метр çӳллĕшне хăпармалла та Пакистан еннелле вĕçмелле. Хушăва пурнăçлатпăр. Йĕри-тавра тĕттĕм, пĕр çутă та курăнмасть. Сасартăк ман оператор: «Командир юлташ, аялта 5 мăшăр çутă!» – тет. Команда пунктне пĕлтеретпĕр. «Пĕтермелле!» – хушу илетпĕр. Ăна пурнăçлама малалла вĕçетпĕр. Сасартăк çутăсем сӳнеççĕ, нимĕн те курăнмасть. Çапах машинăна мĕн май çитнĕ таран аялалла антаратпăр та ракета хыççăн ракета яратпăр. Ун хыççăн пĕтĕм боекомплекта çĕр çинелле вăркăнтаратпăр. Унтан аэродром еннелле çул тытатпăр. Аялалла сăнаса пăхсан пысăк виçĕ çутă курăнать. Апла эпир 3 машинăна лектернĕ. Тепĕр ирхине разведушкăн çар хатĕрĕсем тиенĕ виçĕ автомашина пĕтнине пĕлтерчĕ. Ку манăн пĕрремĕш çар заданийĕ пулчĕ. Ун хыççăн миçе хушăва пурнăçланине шутласа та пĕтеймĕн, – каласăва тăсать çар çынни пулнăскер. – Хăрушă самант тăтăшах пулнă. Пĕррехинче пирĕн çĕр тăрăх пыракан колоннăна хӳтĕлесе пыма тиврĕ. Колонна пуçĕнче – танк, хыçалта – БМП. Иккĕшне те персе лектернĕ. Çунакан техникăна айккинелле куçармалла, колоннăна малалла кайма çул уçмалла. Çакна кĕтнĕ те моджахедсем. Кун пек самантра колонна йĕркеллĕ тухаяс çук. Пире колоннăна çул уçса париччен çапăçăва кĕме хушаççĕ. Тĕтĕм-сĕрĕм, нимĕн те курăнмасть. Çул – сăртлă-туллă. Тусен хушшипе вертолета тытса пыма çав тери кансĕр. Топливо аэродрома çитмелĕх çеç. Çапах хушăва пурнăçласа малалла вĕçетпĕр. Сасартăк пирĕнтен 20-30 метрта взрыв кĕрлет, инçетрен пенипе çеç пирĕн вертолета лекейменни паллă. Анса ларнă хыççăн пирĕн вертолет ала пек шăтнине асăрхатпăр. Хамăр вара «кĕпепе» çуралнине ăнланса илетпĕр.

Пирĕн Союзран килекен е каякан самолетсене хăпарса çитиччен е анса лариччен хӳтĕлесе пымаллаччĕ. Вĕсем çар хатĕрĕсемпе те, çынсемпе те, апат-çимĕçпе те килетчĕç. Душмансем пирĕн самолетсене аялтан персе антаратчĕç. Пĕррехинче çапла разведушкăн ларнă вертолета сыхламалла пулчĕ. Вертолет анса лармалли вăхăт та çитсе пырать, аялта пире асăрхарĕç. Переççĕ те переççĕ. Эпир вертолета çĕр çине чиперех лартрăмăр, хамăр вара юраман çӳллĕшне антăмăр, пирĕн техника çӳллĕ йывăçсен тăррисене те лекрĕ. Ну, лекрĕ кайран командиртан. Юрать полк командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ Извалов хута кĕчĕ, разведушкăн самолетне çăлса хăварнăшăн мухтарĕ те.

Питĕ йывăрччĕ. Çапах çемье çинчен аса илсен вăй кĕнĕ пек туйăнатчĕ. Пĕррехинче комбинезона çăватăп. Вăрттăн кĕсьере хут шыраса тупрăм. Уçса пăхатăп та – пĕчĕк тимĕр хĕрес тата 90-мĕш псалом. Ку «ĕçе», паллах, мăшăрăм кăна тума пултарнă. Пире атеист пек çитĕнтернĕ-çке-ха. Кăларса пăрахмарăм, каялла тирпейлесе чиксе хутăм. Вилĕм куçĕнчен миçе хутчен пăхмарăм-ши, çапах ялан чĕрĕ юлтăм. Апла мана çак япаласемех сыхласа пурăннă.

Чи хăрушши, чи йывăрри – вăрçăра юлташсене çухатни. 1987 çулхи ака уйăхĕнче Теренкот районĕнче ту çинче вырнаçнă афган батальонне çар хатĕрĕсем, апат-çимĕç, шыв çитерсе памалли çинчен хушу килчĕ. Вĕçме питĕ кансĕр. Пирĕн çул çинче моджахедсем сывлăшри самолетсенчен хӳтĕленмелли хатĕрсем йĕркеленĕ. Тепĕр кунхине çур полк çак хушăва пурнăçлама кайрĕ. Малтан икĕ МИ-8 десантниксемпе сывлăша çĕкленчĕ. Ун хыççăн – эпир. Малтанхисем кирлĕ çӳллĕше вĕçсе те çитеймерĕç, икĕ взрыв кĕрлесе кайрĕ. Икĕ МИ-8 çирĕмшер десантникпа пирĕн умрах сирпĕнчĕ. Ыттисем малаллах вĕçетпĕр. Хушнă çĕре çитетпĕр, десант анать, тиеве кирлĕ лапама антаратпăр та каялла таврăнма пуçтарăнатпăр. Çав вăхăтра тепĕр экипажа сывлăшра сирпĕтнине пĕлетпĕр. Çывăхрах тепĕрне лектернĕ. Çапла пĕр вĕçевре алла яхăн юлташа çухатрăмăр.

1987 çулта мана Афганистанран Калининграда куçарчĕç. Савнă мăшăр, икĕ хĕр еплерех савăнăçпа кĕтсе илнине калама та кирлĕ мар».

Ун хыççăн тĕрлĕ çĕрте хĕсметре тăнă Валерий Анатольевич. Офицерăн çĕр-шыв ăçта чĕнет – çавăнта каймалла: Калининград – Берлин – Калининград – Буденновск – Калининград. «Чечен вăрçи пуçланас умĕн нумай офицер хамăр халăхпа çапăçмастпăр тесе хăй ирĕкĕпе рапорт çырчĕ. Вĕсен шутĕнче эпĕ те. 1994 çултанпа эпĕ çар ретĕнче тăмастăп», – тет ĕнерхи летчик.

Çакăн хыççăн Калининград хулинче çемйипе пурăннă вĕсем. 1997 çулта яла отпуска килсен тăван килĕ хупăннине курнă, аппăшне тăванĕсем илсе кайнине пĕлнĕ. Кузнецовсем ăна тăван килне илсе килнĕ. Вăйран сулăннă ват çынна пăрахса хăварма пултарайман вĕсем, яла таврăннă. Халĕ аслă хĕрĕсем ӳссе çитĕннĕ, çемьеллĕ. 2001 çулта йыш хушăннă: виççĕмĕш хĕрĕ Валерия çуралнă.

Савăнаççĕ Кузнецовсем, хăйсене телейлĕ çынсем теççĕ.

■ **Лера КУЗНЕЦОВА,**
Валентина ЯКОВЛЕВА.
Патăрьел районĕ,
Туçа ялĕ

Спорт

Пирĕн команда – виççĕмĕш дивизионра

Виççĕмĕш дивизионра вылякан футболистсен çĕр-шыв ăмăртăвĕ пуçланнă. Унта пирĕн республикăн "ДЮСШ-Чăваш Ен" команди те тупăшать.

Аса илтеретпĕр: команда ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пуçарăвĕпе йĕркеленнĕ. Пирĕн футболистсем иртнĕ сезонра пĕрремĕш турниртан пысăк çитĕнӳпе савăнтарчĕç – виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç. Юлашки хут республика команди çĕр-шыв ăмăртăвне ултă çул каялла хутшăннă.

Кăçалтан командăн ятне улăштарнă /пĕлтĕр "Чăваш Ен-ДЮСШ" пулнă/, футболистсен йышĕ те ылмашăннă. Тĕп тренерĕ – Сергей Ивановах, малашне ăна Сергей Кирсанов пулăшса пырĕ. Çĕнĕ сезон умĕн пирĕн ентешсем Хусанта иртнĕ турниртан тепĕр çитĕнӳпе таврăннă. Унта вĕсем виçĕ турта çĕнтерсе иккĕмĕш кăтартупа палăрнă. Çĕр-шыв ăмăртăвĕнче "ДЮСШ-Чăваш Ен" команди хальлĕхе виçĕ вăйăра вылянă. Анчах иккĕшĕнче /матчсем Сарă ту хулинче иртнĕ/ мала тухайман. Çĕмĕрлери "Труд" стадионта иртнĕ матчра вара Чĕмпĕрти "Волга-ДЮСШ" командăна 4:0 шутпа парăнтарма пултарчĕ. Тепĕр тĕл пулу та Çĕмĕрлерех пулнă, ку хутĕнче пирĕннисем Чĕмпĕр облаçĕнчи "Дмитровград" командăпа вăй виснĕ.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

Каратэ

Латвири Сигулда хулинче пĕтĕм тĕнчери ăмăрту иртнĕ. Унта Раççей, Беларуç, Латви тата Литва спортсменĕсем хутшăннă. Пирĕн çĕр-шыв каратисчĕсем пухмача 11 "ылтăнпа", 9 "кĕмĕлпе" тата 5 "бронзăпа" пуянлатнă. Унта Чăваш Ен спортсменĕсене те ăннă. Шупашкарти политехника институтчĕн 2-мĕш курс студенчĕ Аслан Тимофеев тĕрлĕ турнирта виçĕ кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕренекен Анатолий Морковкин ката енĕпе виççĕмĕш вырăн йышăннă. Чи çамрăк спортсменсен йышĕнче Всеволод Суминпа Аврора Григорьева /Шупашкарти 1 тата 5-мĕш гимназисем/ палăрнă.

Сетокан

Чăваш Ен тĕп хулинчи "Будокан" спорт клубĕнче ăсталăха туптакан Александр Аввакумов Европа кубокĕнчен "бронзăпа" таврăннă. Бельгири Кортрейке хулинче иртнĕ ăмăртăва 22 çĕр-шыв спортсменĕсем вăй виснĕ. ЧР хĕвел тухăç кĕрешĕвĕсен федерацийĕн ертӳçи, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Дмитрий Фомиряков пĕлтернĕ тăрăх – çывăх кунсенче спортсмен Раççейпе Европа командисен хушшинче иртекен турнирта çĕр-шыв чысне хӳтĕлĕ.

Сивĕ шывра ишесси

Республикăри "Аквайспорт" федерацийĕн ишевçисем Чĕмпĕрте иртнĕ марафонçăсен турнирĕнче çитĕнӳпе таврăннă. Пирĕн ентешсем сивĕ шывра пурĕ 16 çухрăма яхăн ишнĕ. Вĕсен йышĕнче Алексей Орловпа Лариса Дашковăна уйрăмах палăртмалла: спортсменсем тĕрлĕ дистанцире тупăшса виçшер медале тивĕçнĕ. Çавăн пекех тĕрлĕ ушкăнра Валерий Губаньковпа Марина Михайлова мала тухнă.

■ **О.МАСЛОВ**

Яваплăх

4 хĕр ачан... пĕр шухăш

Ачасем, çул çитмен 4 хĕр, урамра тĕл пулнă. Мĕн тумалла? Вăрлама каяс…

Кашнин рольне палăртнă хыççăн Çĕрпӳ хулинчи лавккасем тăрăх кайнă. Пĕрне кĕнĕ – ăннă, теприне... Хĕрсенчен иккĕшĕ сутуçăсене калаçтарнă, çакăнпа усă курса вĕсен тусĕсем тĕрлĕ япала вăрланă: колготки, кофтăсем, кĕпесем, енчĕк... Вĕсене çиелти тумтир айне чикнĕ те лавккасенчен çăмăллăнах тухнă. Ачасем çапла хăтланасси пирки сутуçăсем шухăшлама та пултарайман ахăр. Пĕтĕмпе 8 пин тенкĕлĕх тавар, тĕпрен илсен тумтир, вăрланă.

Çапах вĕсен йĕрĕ çине ӳкнĕ. Судра хĕр пĕрчисем хăйсен айăпĕн пĕр пайне кăна йышăннă. Ушкăн малтанах каласса татăлса преступлени тума каварлашман имĕш, пĕтĕмпех ăнсăртран тенĕ пек пулса тухнăмĕн. Анчах тĕпчев çак версие сирнĕ, судра патшалăх айăплавçи вĕсен айăпне туллин ĕнентерсе пама пултарнă.

Çапах шар курнисем ачасене уголовлă майпа айăплассишĕн çине тăман. Çийĕнчен хĕрсем хăйсем те ӳкĕннĕ. Çакна, вĕсем çамрăккине шута илсе суд уголовлă ĕçе пĕтернĕ. Уйрăм чарусем, паллах, пулаççĕ – ирĕксĕрлесе воспитани парассипе çыхăннăскерсем. Куншăн чи малтан ашшĕ-амăшĕ яваплă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Багажникри... лавкка

ШЕМĕн Шупашкарти управленийĕн экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен пайĕн сотрудникĕсем саккуна пăсса алкоголь продукцийĕ сутнин тĕслĕхĕсене тупса палăртас тĕллевпе рейд ирттернĕ.



Эрех сутни пирки панă пĕр пĕлтерĕве Интернетра асăрханă. Унта кăтартнă телефонпа шăнкăравланă та – сутуçă, тĕп хулара пурăнакан 23 çулти çамрăк, «клиентсем» патне кĕçех хăйĕн автомобилĕпе персе çитнĕ. Паллах, шăнкăравлакансем полицирен пулнине пĕлсен тĕлĕннĕ. Унăн машинине тĕрĕсленĕ те – чăн-чăн лавкка тейĕн: хаклă йышши 13 кĕленче алкоголь, 6 савăт сăра...

Тавара, паллах, туртса илнĕ. Эрех суту-илĕвне кустăрма çинче йĕркелеме ăс çитернĕ çамрăк тĕлĕшпе вара патшалăх регистрацийĕсĕр тата ятарлă лицензисĕр предпринимательлĕх енĕпе ççленĕшĕн административлă ĕç пуçарнă.

■ **Н.СТЕПАНОВ.**

Парăм арăм мар – каçармасть

Хăшĕсем парăм çине алă сулаççĕ, суд приставĕсем аса илтерсен те парăма татма васкамаççĕ. Куншăн нимĕн те пулмасть теççĕ пулинех. Йăнăшаççĕ. Çакна Çĕнĕ Шупашкар арçыннин тĕслĕхĕ çирĕплетет. Парăма пула вăл ирĕклĕхсĕр юлнă.

Уголовлă майпа айăпласа 33 çултискере 150 пин тенкĕлĕх штрафланă. Вăл, «маршрутка» водителĕ, çулйĕр правилисене пăснă, яваплăхран хăтăлас шухăшпа ПАИ инспекторне «вырăнтах каласса татăлма» сĕннĕ – 5 пин тенкĕлле. Анчах право хуралĕн сотрудникĕ взяткăна илмен, çийĕнчен кун пирки «çӳле» пĕлтернĕ. Уголовлă ĕç çуралнă.

Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕ арçынна Уголовлă кодексăн 291 статйин 1-мĕш пайĕпе /должноçри çынна взятка пани/ айăплланă. Кунашкаллишĕн яваплăх çирĕп: взяткăн 15-30 виçилĕх штрафлама е 3 çул таран ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме пултараççĕ. Водитель тĕлĕшпе штраф суйласа илнĕ – 150 пин тенкĕ. Анчах арçын штрафа тӳлемен, пакунлисенчен тарса çӳренĕ.

Суд приставĕ ăна ют çĕршыва тухса кайма чарнă, шырава панă, анчах çакă та пулăшман – водитель парăмпа татăлма васкаман. Пакунлисем вара кĕрĕк арки йăваласа ларман, ăна шыранă. Тупнă. Çак кунсенче Çĕнĕ Шупашкар сучĕ уголовлă штрафа яваплăхăн урăх мерипе улăштарнă – арçынна 2 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă. Парăмĕ çине алă сулнăскере суд залĕнченех колоние ăсатнă.

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

172.Гравмассу, керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

246.Гравмассу, песок, торф, **щебень,** чернозём. Доставка. Т.89278672710.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 89033220479, 89033580679.

253.КВАДРОЦИКЛ новый, бензиновый. – 35000 руб. Т. 89379409511.

295.Навоз, торф. Т. 89613383011.

299.Грабли, косилки, ШПАГАТ. Доставка! Тел. 8-937-388-50-89.

УСЛУГИ

250.Кровельные, фасадные работы. **Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

РАБОТА

100. Требуются монолитчики. Т. 8-937-952-58-67.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĕ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĕ
Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Р.А.ВЛАСОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĕ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĕ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Çç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану сулĕпе", "Ят-сум", "Ç